К63.36
Ю41
Ч-38005

Анатолий ЮМАН



# Паттăрлăх вăрттăнлăхĕ

ациональная библиотека ЧР
4-038005



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

– Татьяна
тултарнă кун.

К63.36
Ю41

Анатолий ЮМАН

# Паттăрлăх вăрттăнлăхĕ

Очерк

И-38005

Ульяновск
"Печатный двор"
2002

К 63.362.278<Воробьев Е.Т.>

ББК 63 3(2)622.78 (2Р 31-4 4у)
Ю 41

63.3(2Рос. Чув)622.78<Воробьев Е.Т.>

Выражаю сердечную благодарность коллективу типографии Ульяновского областного издательства "Печатный двор", а также Казакову Михаилу Филипповичу, ветерану военной службы, полковнику в запасе, кандидату военных наук, доценту и предпринимателю за оказанную шефскую и материальную помощь по изданию настоящей книги.

**Автор.**

Юман А. Ф.
**Ю 41** Паттăрлăх вăрттăнлăхĕ.– Ульяновск: "Пичет картишĕ", 2002. – 56 с.

ISBN 5-8426-0063-3

В своем очерке "Секреты воинского подвига" известный чувашский писатель Анатолий Юман (Анатолий Федорович Ермилов) подробно описывает жизненный и боевой путь нашего знаменитого земляка, участника трех войн, ветерана Великой Отечественной, бывшего парторга роты, патриота и настоящего гражданина России, Героя Советского Союза Егора Терентьевича Воробьева.

ПРОВЕРЕНО
2010

4-38005

ISBN 5-8426-0063-3

© А. Юман, 2002
© Печатный двор, 2002
© Составление, художественное оформление ОГУ "Редакция газеты "Канаш", 2002

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



# 1. Ёмĕр çынни

2000 çулта çапăнса тухнă “Ульяновск — Чĕмпĕр энциклопедийĕнче” ун çинчен çапла çырнă: “**Воробьев Егор Терентьевич** (16.04.1918, Вăта Тимĕрçен, халĕ Ульяновск облаçĕ, Чăнлă районĕ, Совет Союзĕн Геройĕ (27.06.45), гв. кĕçĕн сержанчĕ, рота парторгĕ. Тулли мар вăтам пĕлӳ илнĕ. Совет çарĕнче 1938 çулхи август уйăхĕнчен. Халхин-Гол юханшывĕ патĕнчи (1939) тата Совет Союзĕпе финн (1939-1940) вăрçисене хутшăннă, Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çапăçăвĕсенче 1943 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа пулнă. Наступлениri çапăçусенче 1945 çулхи январĕн 12-мĕшĕнчен тытăнса 1945 çулхи февралĕн 3-мĕшĕччен 6 пулемет точкине аркатнă тата вуншар гитлеровеца вĕлернĕ, 9 çынна тыткăна илнĕ. Сăмахпа та, хăй тĕслĕх кăтартса та боецсене паттăррăн çапăçма хавхалантарнă. Вăрçă хыççăн тăван ялĕнче пурăнать, колхозра ĕçленĕ. Ленин, Тăван çĕршыв Аслă вăрçин I-мĕш степень орденĕсемпе, медальсемпе наградăланнă”.

Кĕскен. Чи кирлине çех çырнă йĕркесем. Справка литературин чĕлхи типĕ ĕнтĕ. Вăл ытларах ыйтусем çуратать кăна. Чăнах та, еплеха виçĕ вăрçă витĕр утса тухнă ахаль хресчен ывăлĕ, çара кайиччен аслă шкул пĕтерме те ĕлкĕрейменскер, çĕршывăн чи пысăк наградине тивĕçме пултарнă? Унпа юнашар ытларах вĕренсе пĕлӳ илнĕ, вăй-хал енчен те пĕртте кая мар, чинĕпе те аслăрах салтаксем те йышлă пулнă вĕт-ха? Çапла. Çапăçу хирĕнче паттăрлăх кăтартма

ӳт-пӳ пиҫӗлӗхӗпе тӗрекӗ ҫеҫ ҫителӗксӗр-мӗн, чун тасалăхӗпе ăс-хакăл ҫирӗплӗхӗ, хастарлăхпа чăрсăрлăх, аптраманлăхпа тавҫăруллăх та кирлӗ иккен. Тен, юрату та? Паллах. Епле-ха унсăрăн? Тăван ене, тăван е ҫывăх ҫынсене, атте-аннене, Тăван ҫӗршыва юратни... Апла пулсан, ҫав кирлӗ енсене аякри чăваш ялӗнче ҫуралса ӳснӗ хресчен ачи епле пиллесе упрама пултарнă? Тен, ăнсăртран сиксе тухнă телей саманчӗ ку? Пулать-ҫке-ха е тепӗр чух ҫавнашкал ăнăҫу... Пач кӗтмен-ҫӗртен... Ҫапах та, унашкал паттăрлăх саманчӗ пур пулсан та, чăннипе ҫак чыса тивӗҫ ҫын ун тӗлне пурнăҫ тăршшӗпех хатӗрленет. Апла пулсан, паттăрлăх ăнсăртран ҫуралмасть. Ку е вăл паттăр утăма тишкерни ҫакна тӳрремӗн ҫирӗплетет.

Епле пулсан та, сиксе тухакан ыйтусене туллин хуравлас тесен паттăр салтак кун-ҫулне, унăн йăх-тымартан килекен паттăрлăх вăрттăнлăхне тарăннăн тӗпчени кирли куҫкӗрет.

Егор Терентьевич Воробьев ҫинчен эпӗ чи малтанхи хут вăрҫă хыҫҫăнхи ҫулсенче район хаҫатӗнче вуласа пӗлнӗччӗ. Хаҫачӗ ун чухне, вăрҫă ҫулӗсенчи пекех, ҫаплах икӗ страницăллă форматпа тухса тăратчӗ-ха. Унăн редакторӗ Ирҫел чăвашӗ Михаил Иванович Нюдеев вăрҫăчченхи ҫулсенчех чăвашла тухса тăнă ҫав "Пӗрлешӳллӗ ӗҫ" хаҫатра ӗҫленӗ. Анне каласа кăтартнинчен, вăл ҫамрăк чух аттен ҫывăх юлташӗ пулнине те пӗлеттӗм. Михаил Иванович, хăй те тин ҫеҫ фронтран таврăннăскер, хăнăхнă ӗҫе ҫӗнӗ, тунсăхлă вăйпа кӳленнӗ ӗнтӗ. Ахальтен мар пӗчӗк хаҫатăн кашни номерӗнче тенӗ пекех районти ялхуҫалăх ӗҫӗсемпе ҫыхăннă тӗрлӗрен тӗрленчӗксемпе информацисем ҫапса кăларнипе пӗрлех, тин ҫеҫ кӗрлесе иртнӗ, халăх асӗнче ҫаплах чӗррӗн пурăнакан Аслă вăрҫăри асран каймин ӗҫ-пуҫсем ҫинчен ҫырнă шухăшласа кăларман калавсемпе очерксем те тăтăшах пичетленсе тухатчӗҫ. Вӗсен авторӗ те, тӗпрен илсен, редакторӗ хăех пулнă. Ҫав хайлавсене вăл "М. Вострецов" псевдонимпа пичетлесе пыратчӗ.

Акă манăн алăра "Пӗрлешӳллӗ ӗҫ" хаҫатăн черетлӗ номерӗ. Унăн иккӗмӗш страницинче, "подвалта" М. Вострецовăн вăрҫă ҫинчен ҫырнă очеркӗ ҫапăнса тухнă. "Егор Терентьевич" ятлăччӗ вăл. Ҫапла вара эпир районтан тухнă Совет Союзӗн Геройӗсен йышне тепӗр ят — Егор Терентьевич Воробьев хушăнни ҫинчен пӗлтӗмӗр.

Астăватăп-ха, мана ҫак пӗчӗк очерк хăйӗн ҫивӗч сюжечӗпе тыткăна илнӗччӗ. Унта ҫырса кăтартнă ӗҫсем, чăннипех те приключениллӗ хайлаври пек, хăвăрт та кӗтмен ҫӗртен, питех те хиврен явăнса пыратчӗҫ. Акă пирӗн салтаксен пӗчӗк ушкăнӗ

фашистсем тытса илнӗ каҫхи яла пырса пырса кӗрет. Гитлеровецсен штабне шыраса тупать. Унта – хурал. Чӑваш ачи часовой ҫине кӗтмен ҫӗртен, арӑслан пек, сиксе ӳкет, самантран ӑна "тирпейлесе" те хурать. Часах вӗсем кунтах ларакан тӑшман танкне тытса илеҫҫӗ. Егор Терентьевич танк водителӗн вырӑнне йышӑнать. Хӑюллӑ боецсем штаб вырнаҫнӑ ҫурт ҫине йӗтре кӑларса яраҫҫӗ. Штаба вут хыпса илет. Тревога. Тӗттӗмре нимӗҫ офицерӗсем каҫхи кӗписемпех кантӑксенчен сике-сике тухаҫҫӗ. Анчах вӗсем кая юлнӑ ӗнтӗ. Фашистсем ӑна-кӑна тавҫӑриччен хӗреслӗ танк урам тӑрӑх чӑрмавсӑр малалла вӗҫтерсе пырать, ҫул ҫинче тӑшмансен чӗрӗ вӑйӗпе техникине аркатать...

Ҫавнашкал хӑюллӑ та чӑрсӑр салтаксен паттӑрлӑхӗ епле хавхалантармӗ! Ун чухне "боевик" е "триллер" сӑмахсем ҫукчӗ-ха. Эпир, шкул ачисем, халӗ телевизорпа кунӗн-ҫӗрӗн ҫавӑрттаракан Америкӑра ӳкернӗ кинофильмсене курса ӳсмен. Анчах та Леонид Агаковӑн вӑрҫӑ калавӗсене, унӑн "Ялав" журналта ҫапӑнса пыракан "Ылтӑн вӑчӑра" ятлӑ приключениллӗ повеҫӗнчи ҫар эпизочӗсен чӗрене ҫатӑрласа ярса тытмалла ҫырса кӑтартнӑ сыпӑкӗсене каҫса кайсах вулаттӑмӑр. М. Вострецовӑн "Егор Терентьевич" пӗчӗк очеркӗнче те эпӗ чуна ярса илекен ҫавнашкал тӗрленчӗке тӗл пулса тӗлӗннӗччӗ. Ҫитменнине очерк геройӗ хамӑр ентеш-ҫке-ха. Ҫав вӑхӑтрах чӑваш салтакӗн аптраманлӑхӗпе хӑраманлӑхӗ "Ҫамрӑк гварди" организацийӗнчи йӑрӑ та ҫивӗч Сергей Тюленинӑн чӑрсӑрлӑхне аса илтерет мар-и?

Паттӑрлӑхӑн хӑйӗн виҫи те, терминӗ те пур. Ӑна чехсен коммунисчӗ тата антифашисчӗ, гитлеровецсен концлагерӗнче паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ Юлиус Фучик журналист ҫапла ҫырса кӑтартнӑ: "...кам татӑклӑ самантра этем обществишӗн мӗн кирлине тӑвать – ҫавӑ паттӑр ҫын шутланать". (Юлиус Фучик. "Паттӑрсемпе паттӑрлӑх ҫинчен", "Свет Праце" 8-мӗш №. август, 1934 ҫ.). Ҫапах та паттӑрлӑх шайне ҫити ҫӗкленме уйрӑмах ҫивӗч чӑрсӑрлӑх кирлӗ мар-и-ха?

Ҫак шайран илсе пӑхсан, пирӗн ентеш паттӑрлӑхӗ те ӑнсӑртран пулса тухман. Кайран эпӗ Егор Терентьевич Воробьев ҫинчен ытларах та ытларах пӗлнӗ темелле. Телее часах хӑйпе тӗл пулса паллашма та тӳр килчӗ. Шӑпах ҫав ҫулсенче вӑл ҫуралса ӳснӗ ялта – Вӑта Тимӗрҫенти вӑтам шкулта вӗренсе пӗлӳ илтӗм. Ун чухне ӑна урампа иртсе ҫӳренӗ чух та пӗр хутчен мар тӗл пулнӑ. Район хаҫатӗнче ӗҫлеме тытӑнсан ҫывӑхрах та паллашма пултарнӑ,

гёрлёрен тёлпулусене хутшăнса паттăр салтак хăй çинчен каласа кăтартнисене итленĕ, курни-пĕлнине хаçатсенче çырса кăтартнă. Астăватăп-ха, Е. Т.Воробьевăн 70 çулхи юбилейне районта чаплăн палăртнăччĕ, çавна май Вăта Тимĕрçен ялĕнчи клубра ăна ентешĕсем пĕтĕм халăх умĕнче чысланăччĕ. Çав событи тĕлне эпĕ халал сăвви те çырнăччĕ. Вăл çак йĕркесемпе пуçланать:

Эс çĕр çынни пулма çуралнă,
Эс хунă хăвăн аçуна.
Ун пекех çĕр те сухаланă,
Хĕл кунĕ кӳлнĕ эс çуна.

Эс хунă аннӳне, ун евĕр,
Эс пулнă ырă та сăпай.
Ачаш ӳсмен-ха эс, пĕлетпĕр,
Пĕве çитсе вăй илнĕ май.

Анчах сана-мĕн пӳрнĕ пулнă
Салтак шăпи те... Пĕр ирпе,
Чăваш ачи, эс сывпуллашнă
Тăван ялпа, тăван килпе...

Аялта дата — 1988 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕ. Ку — герой çуралнă кун. Çапла. Сăвăра илсе кăтартнă фактсем пурте тĕп-тĕрĕс. Аякри чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕскер, хресчен ывăлĕ Якур çар çынни пулма ĕмĕтленмен те темелле. Вăл ачаранпах ваттисен ырă йăла-йĕркисене малалла тăсма — çĕр çинче тырă акса çитĕнтерме, алла пуртă тытса çурт-йĕр пуралама, ашшĕпе аслашшĕн шанăçне тӳрре кăларса пурăнма, чăваш ятне çӳлте тытса пыма ĕмĕтленнĕ. Анчах пурнăçра пурте шутланă пек пулса тухмасть çав. Пĕр сăмахпа каласан, кашни çын кун-çулĕ вăл пурăнакан саманапа уйрăлми таччăн çыхăннă. Иртнĕ çирĕммĕш ĕмĕрте вара истори пĕлтерĕшлĕ трагедисемпе катаклизмсем сахал мар пулнă пулсан, уйрăм çынсен кун-çулĕ шăпах вĕсем витĕр тухнă та. Çапла вара инкек-синкекĕ те, хирĕçтăрусемпе пăтравлă самантсем те кашни ăру çынни çине çителĕклех йăтăнса аннă. Егор Терентьевич Воробьев кун-çулĕнче те çав событисем ĕмĕр асăнмалăх тарăн йĕр хăварнă. Çапла вара ăна чăннипех те çирĕммĕш ĕмĕр çынни тесе çирĕплетме пулать.

Халиччен эпĕ хаçатсенче çырнисенче çав ĕмĕр çыннин кун-

çулне тивĕçлипе хак пани пулайман темелле. Ятлă-сумлă вырăс авторсем те пирĕн паттăр ентеш çинчен çырман-ха. Кунта чи малтанах И. И. Рощинпа А. И. Марчукăн "Парторги военной поры" (Мускав, 1979), "На боевом рубеже" (Саратов, 1982) çар корреспонденчĕсен кĕнекисене асăнма пулать. Анчах ентешĕн çапăçури çарти тусĕ, 9-мĕш гварди сывлăш-çар десанчĕн дивизийĕн ветеранĕ, отставкăри полковник И. Чашков çырнă тăрăх, "шел пулин те, асăннă кĕнекесен авторĕсем çырнисенче йăнăшсемпе чăнлăха пăсса кăтартнă тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ". Епле пулсан та, эпĕ Е. Т. Воробьев паттăр салтак умĕнче яланах парăм пуррине туйса тăраттăм, унăн кун-çулĕ çинчен тĕплĕнрех, хăйĕнчен тӳрремĕнех илтсе пĕлес килетчĕ.

2000 çулхи раштав уйăхĕн вĕçĕнче унашкал сăлтав тупăнчĕ. Ун чухне эпĕ Вăта Тимĕрçенти вăтам шкул хăйĕн 160 çулхи юбилейне палăртнă май вырăнти пуçлăхсенчен шкул уявне пырса кайма йыхрав илтĕм. Таса юр кĕрчĕпе витĕннĕ чăваш ялне ирхи автобуспа пырса çитрĕм. Шкул уявĕ пуçланиччен вăхăт нумаййччĕ-ха. Çак пушă вăхăтпа усă курса, эпĕ хамăн пулас очерк геройĕ патне кĕрсе тухма шутларăм.

## 2. Паянхи Вăта Тимĕрçенте

Вăта Тимĕрçен — пысăк чăваш ялĕ. Чăнлă районĕнчи "цивилизаци", тĕпрен илсен, çак ялтан пуçланнă темелле. Чăнах та, кунта 1840 çултах шкул уçăлнă-çке. Хресчен ачисем çав паллă тапхăртан тытăнсах çутта тухма пуçланă темелле. Ун чухне шкуллă ялсене пӳрнепе шутласа кăларма май пулнă. Кунта чи малтанхи интеллигенци çыннисем ӳссе çитĕннĕ. Вăтатимĕрçенсем Ленин тата патшалăх премийĕсен лауреачĕ, хими наукисен докторĕ Иван Иванович Корнилов профессор ячĕпе тивĕçлипех мухтанаççĕ. Пиçĕ сплавсемпе титан шăратса тĕнчипех чапа тухнă çак ученăй шăпах Вăта Тимĕрçенте çуралса ӳснĕ мар-и.

Колхозсем йĕркеленнĕ вăхăтра Вăта Тимĕрçенте машинăпа трактор станцийĕ уçăлнă. Çĕнĕ пурнăç тума тухнă ял çыннисем кунта "хурçă утсем" çине ларма вĕреннĕ, кайран таврари мĕнпур ялсене саланса ака-суха тунă. Хĕрарăмсен малтанхи трактор бригади те шăпах кунта йĕркеленнĕ. Ăна Ксения Герасимовна Пракова ертсе

пынӑ. Çак ӗçчен хӗрарӑма РСФСР Аслӑ Канашӗн малтанхи суйлаври депутатне суйланӑ. "Пирӗн Паша Ангелина", — тетчӗç ӑна тимӗрçенсем. Ку вӑл тӗрӗсех çапла пулнӑ ӗнтӗ. Ксения Герасимовна вӑрӑм та хитре пурнӑç çулӗ утса тухрӗ. Шел, вӑл çӗнӗ ӗмӗре кӗриччен пурӑнаймарӗ, нумаях пулмасть ял çыннисем ӑна юлашки çула ӑсатнӑ. Тимӗрçенте çаплах Социализмла Ӗç Геройӗ ятне тивӗçнӗ Василий Кузьмич Пирогов ячӗ кӗрлетчӗ, вӑл та нумай çулсем хушши трактор бригадине ертсе пынӑ, халӗ тивӗçлӗ канура. Чӑваш халӑхӗн çӳл тӳпинче Тимӗрçен çӑлтӑрӗсем татах та пур. Вӗсен хушшинче Тӑван çӗршывӑн Аслӑ вӑрçинче чапа тухнӑ, Совет Союзӗн Геройӗ Егор Терентьевич Воробьев ячӗ уйрӑм вырӑнта тӑрать.

Пӗр сӑмахпа каласан, çак пысӑк чӑваш ялӗнче пурнӑç вӗресе тӑнӑ çулсем сахал мар пулнӑ. Аллӑмӗш çулсенче те ку ене çирӗм-вӑтӑр çухрӑмри яш-кӗрӗм туртӑнатчӗ — ун чухне çывӑхри пӗртен-пӗр вӑтам шкул кунта пулнӑ-çке. Акӑ паян эпир, çав шкултан вӗренсе тухнисем, вуншар çулсем иртнӗ хыççӑн, юбилей тӗлпулӑвне пухӑнатпӑр. Аса илсе шухӑша каймалли çук мар. Ирӗксӗрех иртнине хальхипе танлаштаратӑн. "Иртни паянхинчен лайӑхрах" тенӗ классик сӑмахӗсем аса килеççӗ. Ку вӑл çаплах ӗнтӗ. Иртсе кайнӑ кунсенче — этем çамрӑклӑхӗ, кун-çулӑн чи илемлӗ, хаклӑ вӑхӑчӗ. Пӗр çавӑнпах иртни чи лайӑххи те, хитри те. Пӗр çавӑнпах кирек мӗнле йывӑр вӑхӑт килсе тухсан та, этем ывӑл-хӗрӗ хӑй умӗнчи тумхахсене сирме пултарнӑ, çутӑ ӗмӗтпе шанчӑкне çухатман. Ӑна кашни утӑмрах çамрӑклӑхпа кӑварлӑ юрату туйӑмӗ çӗклесе хавхалантарнӑ. Ахальтен мар: "Шанчӑк пуррисем телейлӗ", — тесе пӗлтернӗ çӗршывӑн чи йывӑр вӑхӑтӗнче пурӑннӑ, малашлӑхри телее кӗтнӗ, ӗненнӗ, çирӗмвиççӗрех çӗре кӗнӗ чӑваш поэчӗ Çеçпӗл Мишши.

Вӑта Тимӗрçен ялӗн сӑн-сӑпачӗ те, ӑш-чикки те паян урӑхларах. Вӑл пушанса юлни куçкӗрет. Кӳршӗ ял ачисем текех килсе çӳремеççӗ ӗнтӗ кунта. Мӗн тӑвас? Сӑлтавӗ çук. Ял çамрӑкӗсем те ютра лайӑх пурнӑç шыраса саланса пӗтнӗ. Ку чир паллисем "малашлӑхсӑр" пӗчӗк ялсем арканма пуçлансанах хускалнӑччӗ, кайран çав чир пысӑкрах ялсене те самаях хавшатнӑ, ӑс-хакӑл енчен чухӑнлатма пуçларӗ. Пасар самани килсе çапнӑ хыççӑн вӑл тата шаларах кайрӗ. Ӗнтӗ Вӑта Тимӗрçенти унччен тӗреклисен шутӗнче тӑнӑ хуçалӑх та юхӑнсах пырать-мӗн. Фермӑсенче выльӑхсен шучӗ чакнӑ, ака-суха техники кивелсе çитнӗ, вӗсене çӗнетме май та çук. Ахальтен мар кӑçал хуçалӑха тупӑш кӳрекен сахӑр кӑшманӗ пысӑк лаптӑк çинче юр айнех юлнӑ, теççӗ.

Ку чухне Вăта Тимĕрçен халăхĕ эрнере пĕр хутчен — эрнекун — пасара пухăнса илет иккен. Ехрем хуçан ку чухнехи мăнукĕсем суту-илӳ ĕçне кӳленни нумай пулмасть-ха. "Çĕнĕ купцасем" таварĕсене хулари складсенчен куртăммăн йӳнерех хакпа туянаççĕ те ял пасарĕнче хаклăрах хакпа сутаççĕ. Совет саманинче унашкал усламçăсене "спекулянтсем" тесе айăплатчĕç, халĕ вĕсем — "предпринимательсем". Чăннипех те тĕнче пуçхĕрлĕ çаврăнса кайрĕ мар-и? "Цивилизаци" тени çакă пулать-и? Мана тӳрех вилĕмсĕр "Нарспи" авторĕ кулянса каланă сăмахсем аса килчĕç. "Ăçта каяс? Килте юлас, атте лавккинче приказчик пулас килмест ман. Лавккара: "Тупата, ку ун чухлĕ, ку çавăн чухлĕ тăрать", — тесе улталамалла пулать. Улталамасан, лавккара ĕç тухас çук". Çĕнĕ ĕмĕрте ма кивви, юрăхсăрри патне каялла таврăнмалла? Ултав вăрлăхĕ акса малалла каясси иккĕлентерет. Çамрăк ăрăва шел. Кун пек лару-тăрура вăл ăссиленесси, ăс-хакăл енчен чухăнланса юласси куçкĕрет. Ĕçре тупнă телей шанчăклăрах та, хитререх те мар-и? Çакна аслă ăру çыннисен шăпи тепĕр хут çирĕплетет. Вăта Тимĕрçен ялĕн иртнĕ кун-çулĕ çакăнпа та паянхинчен лайăхрах, илĕртӳллĕрех пулнă. Ахальтен мар унта пурнăç вĕресе тăнă.

Çулăн икĕ енĕпе вырнаçса тухнă сутуçăсем таварĕсене пăхса тухнă май çакна асăрхарăм: сутуçисем йышлă, тавар туянаканĕсем вара аплах мар. Вĕсем ытларах, выставкăри пек, кавирсем çине тирпейлĕн сарса хунă, куçа-пуçа алчăратакан çав таварсене курса çӳренипех çырлахаççĕ, туянма укçисем çук. Пенси йĕркеллĕ илсе тăракан ватăсем мăнукĕсене панулмисем çеç мар, ку тăрăхра ӳсмен банансене те туянса сăйлама пăхаççĕ-ха, теприсене канфет-пĕремĕк пултăр. Мороженăй кирлĕ-и? Тархасшăн! Çитĕннисене тăварланă е чĕрĕ пулă илĕртет. Кăлпасси туянса астивесси килет те — хакĕ "çыртать". Вăйпитти колхозниксем ĕçшĕн хăçан укçа илнине те маннă ĕнтĕ. Выльăх-чĕрлĕх е тыр сутса тунă укçипе те хырăм тăрантармалла, те тум туянмалла, те ача-пăчасемпе мăнукĕсене шкула ăсатмалла?

Ял пасарĕпе паллашнă хыççăн чи малтанах шкула кĕрсе Егор Терентьевич Воробьев патне шăнкăравлама шутларăм. Тĕлпулу пирки маларах калаçса татăлнă пулин те, шăпах паян пырса çитесси çинчен пĕлтерейменччĕ эпĕ ăна. Анчах шкулта класс пӳлĕмĕсене тирпейлесе тăракан хĕрарăмсăр пуçне никам та çукчĕ-ха. Телефонĕ директор пӳлĕмĕнче çех, ăна питĕрнĕ. Çавăнпа калаçасси пулмарĕ. Манăн вара ку чухне пĕчченех пурăнакан ватă салтак патне кĕтмен çĕртен тенĕ пек пырса кĕмелли анчах юлчĕ. Кил-çурчĕ тĕлне манса

кайман-ха. Аслă урама тухмалла та ял вĕçне çити тенĕ пек утмалла. Çитменнине стени çинче: "Ку çуртра Совет Союзĕн Геройĕ Егор Терентьевич Воробьев пурăнать", — тесе çырнă хăма татки те пур.

Ял урамĕнче йĕрсем çукпа пĕрех. Тин çеç çуса тултарнă ашăм юр çинче пĕртен-пĕр ансăр сукмак. Малта икĕ ĕмĕлке курăнса кайрĕ. Вĕсем паллана çынсемех иккен. Малти — тачка ӳт-пӳллĕ ватти — Кузьма Петрович Благороднов, Тăван çĕршыв аслă вăрçин участникĕ, нумай орденсен кавалерĕ, çав шутрах виççĕмĕшпе иккĕмĕш степеньлĕ "Мухтав" орденĕсем те пур унăн. Эпир Тимĕрçен шкулĕнче вĕреннĕ чух вăл ял клубĕн директорĕнче тăрăшатчĕ, питĕ йăрă та вăйпитти чăвашчĕ, халĕ акă хулăнланса кайнăскер, аран-аран тарăн юра ашса пырать. Унăн юлташĕ те ялти сумлă çын — Дмитрий Александрович Казаков, пенсие тухиччен трактор бригадине ертсе пынăскер,.Ленин орденĕн кавалерĕ. Вĕсем пасара кайма тухнă иккен.

— Ĕçсем мĕнле пыраççĕ сирĕн? — ыйтатăп-тĕпчетĕп ветерансене, чăваш йăлипе, сывлăх суннă май.

— Мĕнле пултăр ĕнтĕ? Кама кирлĕ çынсем халĕ эпир? — кăмăлсăррăн тавăрчĕç вĕсем, пĕр-пĕрин çине нумайранпа курман пек пăхса илсе.

Хуравĕ ыйтуллă пулин те, ăнланса илме йывăрах пулмарĕ вĕсене. Этем чысне унăн ĕçне кура мар, укçа шайĕпе виçнĕ чухне ваттисене çех мар, çамрăксене те йывăр килни каламасăрах паллă. Эпĕ ăçта кайма тухнине пĕлсен, Кузьма Петрович урамăн сылтăм енĕпе утма канаш пачĕ.

— Егор Терентьевич пасара тухаканччĕ-ха вăл. Тен, хирĕç те пулăн? Лаши пур ун халь. Ял хушшине лашапа тухса çӳрет, — терĕ ятлă-сумлă ветеран.

Анчах çул çинче çуран çынсем çех тĕл пулкаларĕç. Паттăр салтак çуртне çăмăллăнах шыраса тупрăм. Анчах малтан шăнкăравласа хурайманшăн тепĕр хут ӳкĕнме тиврĕ. Алăк патне пымалли çула сăнчăрти пысăк йытă хуралать. Вăл ют çынна калитке яхăнне те ямасть.

Çакăн сăлтавне те пĕлетĕп-ха. Пĕр вăхăтра ахăрсамана шăппанисем совет наградисене вăрласа услам тума ярăннăччĕ. Унашкал вăрă-хурахсем Егор Теретьевичăн çар наградисене те куç хывнă пулнă иккен. Кун çинчен "Советская Россия" хаçатăн 1998 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче тухнă номерĕнче çапла çырнăччĕ: "Вчера мы позвонили в село Средние Тимерсяны Ульяновской области,

откуда он родом, и где живет всю свою прекрасную, гордую жизнь, чтобы поздравить ветерана с праздником. С радостью узнали, что он жив, здоров и бодр и вместе с земляками остался верен Советской власти. Но рассказали нам неприятную историю, которая случилась с Егором Терентьевичем полгода назад: выкрали у него единственный пиджак со всеми фронтовыми наградами. Спасибо милиции, нашли похитителя и вернули солдату его кровью заслуженную Звезду Героя и все другие награды".

("Советская Россия" хаҫата пирӗн паттӑр ентешӗн шӑпи ахальтен мар кӑсӑклантарнӑ. Аслӑ Ҫӗнтерӳ пулнӑранпа 50 ҫул ҫитнине халалласа кӑларнӑ ятарлӑ номерте, 1995 ҫулхи майӑн 9-мӗшӗнче, Луиза Гладышева журналист ҫав хаҫатра "Солдат Егор Воробьев" ятлӑ пысӑк очерк пичетлесе кӑларнӑччӗ. Ҫав очерк Г. К. Жуков асаилӳ кӗнекинчен илнӗ "Слово к потомкам" ятлӑ сыпӑклӑ пӗр разворотрах ҫапӑнни те, Ҫӗнтерӳ Маршалӗпе паттӑр салтакӑн сӑнӗсем вулакан умне юнашар тухса ларни те ӑнсӑртран мар тес килет. Совет Ҫарӗн хӑвачӗ шӑпах унӑн генералитечӗпе ахаль салтакӗсен, вӗсем урлӑ пӗтӗм халӑхӑн пӗр шухӑшлӑхӗнче тӗвӗленсе тӑнӑ-ҫке-ха).

Чӑвашсем ӗлӗкрен кил-ҫурт е хапха алӑкне ҫӑрапа питӗрмен. Чи шанчӑклӑ хурал вӑл вӗсен кӳрши пулнӑ. Ку чухне акӑ ял ҫыннисем те кӑнтӑр кунӗнчех ҫӑрапа питӗрӗнсе ларма пуҫларӗҫ мар-и. Хапхисене сӑлӑп хураҫҫӗ, хӳме тӑррисене йӗплӗ пралуксемпе кара-кара илеҫҫӗ. Хулара та ҫавах. Алӑкӗсене хурҫӑ листасемпе ҫирӗплетеҫҫӗ, кантӑкӗсене тимӗр решеткесемпе карса илеҫҫӗ. Унта та, кунта та овчаркӑсем ҫуртсене хуралласҫӗ. Мӗн пулса тухать-ха капла? Шухӑшлӑр-ха, тӑвансем! Ӗнтӗ пӗтӗм ҫӗршыв тӗрме кил-картине аса илтерет мар-и? Демократсем халӑха ҫаплах Сталин саманинчи Гулагпа хӑратаҫҫӗ. Совет саманинчи пулса иртнӗ трагедилле пулӑмсем тек каялла таврӑнас ҫук. Халӗ акӑ чӑннипех те пӗтӗм Раҫҫей Гулага ҫаврӑнать мар-и? Вӑрӑ-хурахӗ вара ҫаплах чакмасть.

Пулса тухнӑ пӑтӑрмах хыҫҫӑн Егор Терентьевичӑн та овчарка туянса яма тивнӗ. Мӗн калӑн, хуралҫӑ-йытӑ хӑйӗн тивӗҫне шанчӑклӑ пурнӑҫлать. Халӗ те акӑ эпӗ хапха патне пырсанах вӗрме пуҫларӗ. Хапха хӑмине алпа шаккани шалта илтӗнмест пулас. Веранда алӑкӗ шӑтӑрнак ӑшӗнче, унта кӗме ҫук. Ирӗксӗрех хам килсе ҫитни ҫинчен пӗлтерме кӳршисем патне кайса телефонпа шӑнкӑравлама тиврӗ. Егор Терентьевич килтех иккен. Вӑл мана хапӑлах пулчӗ. Пӑртакран эпӗ каллех алӑк умне пырса тӑтӑм. Куннехинче унта йытӑ ҫукчӗ ӗнтӗ.

— Мухтар, атя сана картишне кӗртсе ярам, — илтӗнчӗ ҫенӗхре кил хуҫи сасси.

Юлашки вӑхӑтра Егор Терентьевич урисем ыратнипе аптранӑ иккен. Патак ҫине таянса уткалать. Хыткан та яштака ӳт-пӳллӗскер, хӑйне ҫаплах патвар тыткалать-ха. Питӗнчи пӗркеленчӗксем йышланнӑ, киввисем татах та тарӑнланнӑ пулин те, сӑрӑ куҫӗсем ҫаплах хӗлхем сапса ҫунаҫҫӗ.

Пӗр-пӗрне сывлӑх сунса саламланӑ хыҫҫӑн, пӑртакран эпир сӗтел хушшине меллӗн вырнаҫса ларсах калаҫма тытӑнтӑмӑр. Ҫӑннипе вӑл пулни-иртнине аса илет, эпӗ ӑна итлесе ларатӑп, хӑш-пӗр самантсене манса каясран блокнот ҫине ҫыра-ҫыра хуратӑп.

## 3. Атте-анне

— Манӑн атте, Терентий Осипович, 1889 ҫулта Вӑта Тимӗрҫенте ҫуралнӑ. Терентюк, тесе чӗнетчӗҫ ӑна ял ҫыннисем. Анне, Татьяна Захаровна (Тятюк) унран пӗр ҫул аслӑрах пулнӑ. Пӗрлешиччен те вӗсем пӗр касӑрах пурӑннӑ, — пуҫларӗ хӑйӗн сӑмахне Егор Терентьевич. — Атте ҫурчӗ касӑри чи катариччӗ. Вӑта Тимӗрҫенпе Анат Тимӗрҫен ялӗсене уйӑрса тӑракан Кӗтӳ кӗпер ҫырми хӗрринчех ларатчӗ. Колхоз пуличчен арман ҫукчӗ ялта. Манӑн атте, Анатри ялти Кутинов Денис, Утин Николай — виҫҫӗш калаҫса татӑлса шыв арманӗ туса лартнӑ. Виҫӗ ҫул ӗҫленӗ ҫав арман. Колхоз йӗркеленнӗ вӑхӑтра арманӗ эртел харпӑрлӑхӗ пулса тӑчӗ, "арман хуҫисене" ҫуртран кӑларма пычӗҫ. Ҫӑннипе илсен, арманӗсӗр пуҫне аттен ытлашши пурлӑхӗ нимӗн те пулман та темелле. Арманне те вӑл хӑй аллипе тунӑ-ҫке, тарҫӑ тавраш пулман унта. Анчах ун чухне ӑна-кӑна уясах тӑман. Тустараканӗсем хӑйсем те ӗҫкӗпе супнӑскерсемччӗ. Атте хӑйшӗн тӑма пӗлетчӗ. Ӗнтӗ пиччепе эпӗ те ҫула кура мар патвар ҫитӗннӗскерсем, ӑна кашни утӑмрах пулӑшма тӑрӑшнӑ. Пире тустараймарӗҫ. Атте ытларах пушар хуралӗнче тӑрӑшрӗ. Колхоза кӗнӗ хыҫҫӑн мӗн виличченех унта ӗҫлерӗ. Арманне тӑвиччен пуянсем патӗнче тар тӑкнӑ — ака-суха тунӑ, тыр вырнӑ, авӑн ҫапнӑ. Лопатино ялӗнчи вырӑс пуянӗ патне ӗҫе ҫӳренине астӑватӑп. Анне те ахаль ларман: колхоз улӑхӗнче утӑ ҫулнӑ, хирте тыр вырнӑ, авӑн ҫапма кайнӑ. Ун чухне пӗрлехи хуҫалӑхра молотилка пурччӗ.

Атте-аннен ачи-пăчи йышлă пулнă. Вун пĕр ачаран виççĕн çех тĕрĕс-тĕкел ӳсрĕмĕр. Ыттисем тĕрлĕ чир-чĕре пула ачаллах вилсе пынă. Çапла вара эпир çемьере виçĕ ывăлччĕ. Асли, Василий, 1908 çулта çуралнăскер, шоферта ĕçлерĕ. Унăн пĕр çитменлĕхĕ пурччĕ, вăл ĕçке юрататчĕ. Çавна пула вăхăтсăр çĕре кĕчĕ темелле.

Эпĕ 1918 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче çуралнă. Кĕçĕн шăллăм — Андрей, 1921 çулта çуралнăскер. Вăл та шоферччĕ. Юн тымарĕ чирне пула вăл та вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

Эпĕ аннене хунă пулас. Вăл ялти чи вăрăм ĕмĕрлĕ çынсенчен пĕри пулчĕ — 100 урлă каçичченех пурăнчĕ...

Çапла. Эпĕ Тятюк аппана лайăх астăватăп-ха. Унăн 100 çулхи юбилейĕ çинчен хаçатра та çырса кăтартнăччĕ. Çавна май Воробьевсем патĕнче пулса унпа вăрахчен калаçса та ларнăччĕ. Хаçатра сăн ӳкерчĕкне те çапса кăлартăмăр ун чух. Кайран, тепрехинче пырсан, вăл хăйĕн кинĕпе, Егор Терентьевич мăшăрĕпе, Альта аппапа пĕрле çурт умĕнчи пĕрене çинче хур чĕпписене кĕтсе ларнине астăватăп. Ăс-тăнĕ питĕ çивĕччĕ-ха унăн. Иккĕшинчен хăшĕ ватăраххине уйăрса илме те йывăрччĕ ун чух. Шӳт тума та хавасчĕ. Сăмах май каласан, вăрăм ĕмĕрлĕ çынсем яланах пурнăçа юратнипе уйрăлса тăраççĕ мар-и. Астăватăр-и, Петĕр Хусанкайăн "Тантăшсем" сăвăри çак йĕркесене:

> Ик старик тĕлпулчĕçĕ,
> "Сыпнă" иккĕш те, куран,
> Шăппăн çĕлĕк илчĕçĕ,
> Алă тытрĕçĕ унтан.
>
> Тинкерсе пăха-пăха,
> "Пит аван-и" выранне,
> "Эс халь те вилмен-и-ха?!"
> Терĕç харăс пĕр-пĕрне.

Ун чухне эпĕ, ватăсем патне пырса сывлăх сунсан, Тятюк аппа мана палласа илчĕ те:

— Эс халь те вилмен-и-ха? — тесе сывлăх сунчĕ.

Вăл хăй пĕлмесĕрех Хусанкай сăввинчи герой сăмахĕсене калани мана питĕ тĕлĕнтернĕччĕ.

Тятюк аппа, паллах, ялти ытти хĕрарăмсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман темелле. Ача-пăча ӳстернĕ, çав вăхăтрах колхоз

хирӗнче вӑй хурса ӗҫлеме те вӑхӑт тупнӑ, вӑрӑм ӗмӗрлӗ пулас тесе кил-йышра ыттисенчен уйрӑм апат ҫисе те ӳсмен. Уявсем ҫитсен ӗҫкӗ-ҫикӗсене те хутшӑннӑ. Эпӗ Чӑвашкасси ачи пулнине пӗлсен: “Терентюкпа пӗрле эпӗ сирӗн ялта хӑнара та пулнӑ. Пӗлӗш ҫын пурччӗ пирӗн унта. Сайдяшев хушаматлӑскер. Пӗррехинче лаша кӳлсе ятарласах хӑнана кайса килтӗмӗр”, — терӗ Тятюк аппа.

Анчах кирек мӗнле лару-тӑрура та виҫерен тухман, яланах халӑхпа пӗрле пулнӑ, унӑн ырӑ йӑла-йӗркисене тытса пыма пӗлнӗ. Ман шутпа, Тятюк аппан вӑрӑм ӗмӗрӗн вӑрттӑнлӑхӗ шӑпах ҫакӑнта, чӑваш сӑпайлӑхӗнче, аптраманлӑхӗнче, кӑмӑл-сипет хитрелӗхӗнче.

# 4. Ҫамрӑклӑх

— Хама илес пулсан, — малалла каласҫма пуҫларӗ Егор Терентьевич, — эпӗ те тантӑшсенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑман темелле. Ялти шкулта тӑватӑ класс пӗтерсен килте атте-аннене пулӑшнӑ. Ҫав вӑхӑтрах тӗнчене тухса курас килетчӗ. Пире, 15-16-ри ҫамрӑксене, аслӑ ҫӗршыв талккишӗпе сарӑлнӑ пысӑк ӗҫсем илӗртетчӗҫ. 1934 ҫулта вербовкӑпа Оренбург облаҫне тухса кайрӑм. Урал юханшывӗ хӗрринчи “Орметзолото” пӗрлешӗвӗнче строительствӑра ӗҫлерӗм. Кун хыҫҫӑн Куйбышев хулине куҫрӑм. Унта юханшыв портӗнче грузчика кӗрӗшрӗм. Тӗнче касса йӑлӑхсан атте-анне килне таврӑнтӑм. Вӑтӑрмӗш ҫулсенче ялсене трактористсем кирлӗ пулнӑ. Ҫавна май Тимӗрҫен МТСӗнче трактористсен курсӗ уҫӑлнӑччӗ. Унта ҫамрӑк каччӑсем ҫех мар, хӗрсем те вӗренетчӗҫ. Эпӗ те пысӑк хаваспа трактористсен курсне пӗтертӗм. Ҫапла вара 1936-1937 ҫулсенче Тимӗрҫен МТСӗнче ӗҫлерӗм. Трактористсен курсне пӗтерсен малтанхи ҫул мана Тельман ячӗллӗ колхоза — кӳршӗри Ирҫел ялне ячӗҫ. Манӑн напарник Азанов Степан. Опытлӑ трактористчӗ. Ҫтаппан — вӑтӑрсене ҫитнӗ вӑйпитти арҫын, эпӗ — ҫамрӑк каччӑ. Вӑл мана ӗҫе хӑнӑхтарать. Хирти ҫурхи ӗҫсем ҫимӗк вӑййисемпе тӳр килеҫҫӗ. Каҫ-каҫ Ирҫел хӗрӗсемпе каччисем вӑййӑ калаҫҫӗ. Вӗсен сасси каҫхи уҫӑ сывлӑшра инҫене илтӗнет. Манӑн та вӑййа тухас килет. Анчах сменӑна пӑрахса епле кайӑн-ха? Бригадӑра хӗр-трактористка та пур. Нятта ятлӑ чиперкке. Эпир унпа вӑййа тухса каласҫма татӑлтӑмӑр. Эпӗ хамӑн трактора пӗрле ӗҫлекен ҫамрӑк ачана — плугаре шанса хӑвартӑм. Килнӗ ҫӗре моторӑн шатун

подшипникĕ ирĕлнĕ ларнă. Расплав. Сăмахĕ ку ун чухнехи трактористсене шиклентерсе калаçтаратчĕ. Ку ĕç маншăн начарпа пĕтме пултарнă. Йĕркисем çирĕпчĕ-çке. Мĕн тумалла? Мастерскойне кайсах юсатармалла. Степан Азанов калать: "Ху кай, эпĕ каймастăп. Мана е штраф тăвĕç, е суда парĕç", — тет. Туятăп-ха: тĕрĕснех калать напарник, айăпа кĕме пĕлтĕн пулсан — явапне те тытма пĕл.

МТС заведующийĕ Тимофей Мурзайкин — Нятта пиччĕшĕ. Крутта çын. Çапах та эпĕ ун патне пырса инкек пулса тухни çинчен пĕлтерме хăюлăх çитертĕм. "Трактор ирĕлсе ларчĕ", — терĕм.

Инкекĕ манăн айăппа пулса тухнине пĕлсен, чĕрре кĕме пуçларĕ çакскер. Тĕпчет. "Кампа сĕтĕрĕнсе çӳрерĕн?" — тет. Манăн каласа памаллах пулчĕ.

— Няттапа, — тетĕп. Ĕненмеллерех пултăр тесе: — Эпĕ ăна качча та илесшĕн-ха, — тесе хутăм.

— Тьфу, анчăксем! — çаплах вăрçать мана МТС пуçлăхĕ.

Анчах йăмăкĕн ятне илтсен пăртак йăвашланчĕ. Мăкăртата-мăкăртатах специалиста чĕнсе илчĕ. Самантрах запас пайне тупса трактора хута ячĕç. Çапла йĕркене вĕрентрĕç. Кун хыççăн никама та руль шанса паман.

Ĕççи пуçлансан комбайн çине куçарчĕç. Хамăр яла штурвальнăй кирлĕ пулнă иккен. "Кама ярас? Воробьев пултармалла", — теççĕ. Çапла вара эпĕ, çамрăк механизатор, штурвал умне тăтăм. Комбайн çинче Евдокия Александровна Чамкинăпа (Альтукпа) ĕçлерĕм. Кантăр вырса пĕтерсенех мана салтака илчĕç. 1938 çулхи августăн 25-мĕшĕнче килтен тухса кайрăм. Ку вăхăтра эпĕ çемье çавăрма та ĕлкĕрнĕччĕ. Пурăнасса атте килĕнчех пурăнаттăмăр-ха.

Ăсату саманчĕ халĕ та асра. Эпир ялтан виççĕн тухса кайрăмăр: хирĕç ретри катари çуртра пурăнакан тантăшăм — Константин Дмитриевич Галкин. Вăл кайран та манран юлман. Монголи çеçенхирĕ тăрăх та пĕрлех çӳреме тиврĕ. Тепри — Николай Иванович Кузьмин.

Пире чаплăн ăсатрĕç. Колхоз правленийĕ хăналасах чысларĕ. Ун чухне Хĕрлĕ çара кайма юрăхлă пулассишĕн ялти кашни каччă ĕмĕтленнĕ мар-и?

Колхоз йăхăрĕсене пăхакан Михаил Феоктистов конюх чи юратнă çил-çунатне кӳлсе пычĕ. Йăхăрĕ хăй çине хунă пысăк чыса туять тейĕн — пуçне, çĕлен пек, ухса кăна тăрать. Аттепе анне пӳрт

умĕнчи çерем çине тухса ăсатса ячĕç. Кÿршĕ-аршăсемпе урамри çарран ача-пăча та кунтах. Манăн çамрăк арăм, Альта, шывланнă куçĕсене вăрттăн шăла-шăла илет. Ун çине пăхсан хамăн та кăмăл хуçăлать. Ара эпир пĕрле нумай та пурăнса ĕлкĕреймен-ха. Ӳсессе пĕр урамрах ӳснĕ. Тăлăх-туратчĕ вăл. Халĕ акă каллех пĕччен юлма тивет.

Альта та урапа çине ман çума сиксе ларчĕ. Çапла вăл Ульяновскри сборнăй пункта çитиех ларса пычĕ. Акă тĕреклĕ хулçурăмлă вăйпитти лавçă тилхепине ярса тытрĕ те урхамах çак саманта кĕтсе кăна тăнă тейĕн, самантрах малалла тапса сикрĕ, Кĕтӳ çырми урлă хывнă кĕпер хăмисем кĕрлесе çех юлчĕç.

# 5. Аслă вăрçă прологĕ

Тăван çĕршыв аслă вăрçи умĕнхи çулсем пирĕн чăнласа мирлĕ çулсем пулнипе асра юлнă. Анчах Совет влаçĕн тăшманĕсем рабочисемпе хресченсене çĕнĕ йышши патшалăхне кашни утăмрах ура хума чарăнман. Çавăнпа унăн ертӳçисем мирлĕ тапхăрта та тăшмансем кашни самантрах тапăнса кĕме пултарни çинчен манса каймалла пулман. Революци çĕнтерĕвĕсене тĕрĕс-тĕкел сыхласа хăварас тесен çĕршыв тĕрекне çирĕплетсех тăма тивнĕ. Çапла вара тĕнчери лару-тăру "тара яланах типĕ тытма", Хĕрлĕ çар хăватне çирĕплетсех пыма хистенĕ. Тӳреммĕн тапăнса кĕнисем те пулман мар. Тĕслĕхшĕн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Хасан кӳлли патĕнчи çар конфликчĕсене, Халхин-гол патĕнчи хаяр çапăçусене, юлашкинчен Финн вăрçине аса илниех çителĕклĕ. Чăннипе илсен, çав "пĕчĕк вăрçăсем" Совет Союзĕн таса сенкер тӳпине хура пĕлĕтсем карса илме пуçланнине пĕлтернĕ те. Çапла вара ку вăл Тăван çĕршыв аслă вăрçи пролоrĕ пулнă темелле. Çав вăхăтрах "пĕчĕк вăрçăсенче" Хĕрлĕ Çар полководецĕсен ăсталăхĕ ӳснĕ, çар техники тĕрĕсленнĕ, ахаль салтаксемпе офицерсем çапăçури ăсталăхне туптанă.

Монголи Халăх Республикине тапăнса кĕнĕ Япони агрессорĕсене хирĕç пынă çапăçусенче Г. К. Жуков комкорăн полководец таланчĕ яр-уççăн палăрнă. Вăл çар операцийĕсене ăста хатĕрленсе ирттерме пĕлнĕ çеç мар, чее те хаяр тăшмана хирĕç çапăçма тивнине те пусса палăртма манман. "Тăшмана айванла кăтартма хăтланни хамăрăн çапăçури ăнăçлăхсене пĕчĕклетсе кăтартни те пулнă пулĕччĕ", — тесе вĕрентнĕ салтаксене. Акă унăн

асаилĕвĕнчи хăш-пĕр йĕркесем. Эпĕ вĕсене вырăслах илсе кăтартатăп: “Японцы сражались ожесточенно. Я противник того, чтобы отзываться о враге унизительно. Это не презрение к врагу, это недооценка его. А в итоге не только недооценка врага, но и недооценка самих себя. Японцы дрались исключительно упорно, в основном — пехота. Помню, как я допрашивал японцев, сидевших в районе реки Хай-Ластын-Гол. Их взяли там в плен, в камышах. Так они все были до того изъедены комарами, что на них буквально живого места не было. Я спрашиваю их: “Как же вы допустили, чтобы вас комары так изъели?” Они отвечают: “Нам приказали сидеть в дозоре и не шевелиться. Мы не шевелились”. Действительно, их посадили в засаду, а потом забыли о них. Положение изменилось, и их батальон оттеснили, а они все еще сидели там, уже вторые сутки, и не шевелились, пока мы их не захватили. Их до полусмерти изъели комары, но они продолжали выполнять приказ. Это действительно настоящие солдаты. Хочешь не хочешь, а придется уважать их”.

Г. К. Жуковăн çакнашкал çар шкулне иртнĕ те ĕнтĕ пирĕн ентеш асăннă событисене хутшăннă май. Сăмах май каласан, пĕррехинче ăна Георгий Константиновичпа тĕл пулса сăмах хушма та тивнĕ. Кун çинчен аяларах чарăнса тăрăпăр. Акă мĕнле аса илет вăл хăйĕн Тăван çĕршыв аслă вăрçичченех пуçланнă салтак хĕсмечĕн шăпине.

— Пире, çамрăк салтаксене, хăнăхнă йăлапа, çаплах призывниксем тетчĕç-ха. Кĕçех вăрăм эшелонсене вырнаçтарчĕç. Ульяновскри вокзал перронĕнче ăсатма пынă халăх туп-тулли. Акă пăравус шăхăрса ячĕ те эшелон Куйбышев енне хускалса кайрĕ. Ун чухне тавар турттаракан пуйăссем хăвăртах çÿрейместчĕç, станцисемпе перегонсенче те вăрах ларатчĕç. Çавăнпа çул çинче шухăш çăмхине сÿтсе пыма та вăхăт пулнă. Çĕршыв Май уявне чаплăн уявласа иртгерни асран каймасть. Çаплах вăл Совет влаçне туса хунăранпа 20 çул çитнине пысăк çĕкленÿпе палăртнăччĕ. Çирĕм çул! Эпир хамăр та çирĕмре çех пулнă. Çапла шутласан пурăнас, савăнас килет. Çак хаваслăх туйăмне кашни сăн-питрех куратăн. Салтак çулĕ пире ăçта илсе çитерĕ?.. Иркутск хулине пырса çитсен çех хамăра Байкал леш енчи çар округне илсе кайнине тавçăрса илтĕмĕр. 4-38005

Ирпе ирех Борзя станцине çитрĕмĕр. Пире кунта антарчĕç. Кун хыççăн автомашинăсем çине ларса Соловьевск станцине


НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

çитрĕмĕр. Ульяновскран тухсан 25 кунтан тин вырăна пырса çитрĕмĕр. Соловьевка станцийĕ шăп та шай чикĕ хĕрринче иккен, казарма вара чикĕрен 500 метртра çех вырнаçнăччĕ. Кунта эпир шоферсен курсне пĕтертĕмĕр. Пĕр уйăхран руль умне лартрĕç. Соловьевкăран Монголие куçарчĕç. Кĕркунне, çĕр шăнманччĕ-ха ун чух. 200 километр руль умĕнче ларса пытăмăр. Кунта палаткăсенчен "хула" туса лартрăмăр. Пĕр метр чухлĕ çĕр чавса. Çавăнтах хĕл каçрăмăр. Сивĕ. Хĕл каçиччен мотора сӳнтермен. Палаткăсем карса 2-3 автомашина вырнаçмалăх мастерской тунăччĕ. Эпир виçĕ тонна чухлĕ груз турттаракан бензовозсемпе танксем валли бензин турттаратпăр. Халхин-Гол пиртен 650 çухрăмра. Унта пирĕн çарсем туслă монголсене тăшмансем тапăнса кĕресрен хӳтĕленме пулăшаççĕ. Çирĕп расписанипе çула тухатпăр. Асфальт тавраш ĕ çук. Питĕ начар çул. Ашăм. Çул вĕçĕ-хĕррисĕр çеçенхир урлă выртать. Çил витерсе вĕрет. Тепĕр чух пĕр-пĕрне кĕтсе ларма та тивет. Пĕр лакăм вырăнта тарăн мар пусă пурччĕ. Унтах автомашинăсен радиаторĕсене шыв яраттăмăр. Тараса витрине тиртен çĕлесе тунă. Юртăсенче пурăнакан монгол çыннисем пире ăшшăн кĕтсе илетчĕç. Веç пĕр пек тумпа: те арçын, те хĕрарăм — уйăрса илме те çук.

— Бык! Бык! — тет пĕри вырăсла. Сăмахĕ мĕне пĕлтернине кайран çех тавçăрса илтĕм. Ку вăл хăй арçын пулнипе çапла пĕлтернĕ иккен. Туртмалли табакпа сăйлать. Эпĕ туртман. Кун çинчен алпа паллă туса пĕлтертĕм.

Вырăнти хресченсем лаша, ĕне, сурăх нумай усраççĕ. Ĕнисем вакрах. Лашисем алла вĕренменскерсем. Хуçисем юланутсемпе çӳреççĕ. Çичĕ-сакăр анчăк усраççĕ. Ку тăрăхра çаплах хир качакисем нумайччĕ. Ун чухне монголсем кашни çын пуçне 28 центнер какай туса илеççĕ, тетчĕç. Танкистсен хушшинче монголсем те нумайччĕ.

Халхин-Гол патĕнче çапăçусем пуçлансан, пĕррехинче пирĕн автоколоннăна Япони самолечĕсем тапăнчĕç. Бомбăсем тăкаççĕ. Манăн автомашинăн тăвата урапине те шăтарчĕç. Юрать-ха бензин бакне вут тивсе каймарĕ. Çур сехетрен хăрушлăх иртсе кайрĕ.

— По машинам! — пулчĕ команда.

Анчах манăн епле хускалса каяс-ха? Ирĕксĕрех çул çине ларса юлтăмăр. Манпа пĕрле Келье хушаматлă политрук ларса пыратчĕ. Грек. Ирĕксĕрех хирте икĕ талăк ытла пулăшу кĕтсе ларма тиврĕ. Выçă. Политрукăн теплерен иçĕм çырли пулнă. Вăл çиет те çиет вăрттăн. Манăн та тутанса пăхас килсе кайрĕ. Тӳсеймерĕм, хăй

пăраннă вăхăтра юлашки исĕм çырли çупкăмне çисе ятăм.

— Ăçта ман исĕм? — тет хайхискер кайран.

Эпĕ хам çисе янине пытармарăм. Çакскер пистолетне кăларса хăмсарма тытăнчĕ.

— Персе пăрахатăп! — тесе хăратать.

Тепле вĕçленетчĕ çак хирĕçÿ, çав вăхăтра пирĕн пата сасартăк автомашина килсе çитрĕ.

— Кто кого успеет?! — илтĕнчĕ çирĕп сасă.

Эпĕ хам ентешĕме Василий Матвеевич Егорова, кÿршĕри Аркаево сала вырăсне палласа илтĕм. Вăл хăйĕн винтовкине ман çине ал çĕкленĕ политрука тĕлленĕ. Политрук аллинчи пистолет лап! ÿкрĕ.

— Мĕн пулса иртнине никама та ан шарлăр, — тесе йăлăнма пуçларĕ юлашкинчен, хăраса ÿкнĕ çулташ.

Çавах та манăн ентешĕм çул çинче пулса иртнĕ пăтăрмах çинчен чаç командирне пĕлтернĕччĕ, ăнăçсăр политрука урăх çĕре куçарчĕç. Василий Матвеевич Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче те паттăррăн çапăçнă. Таврăнсан та туслăха çухатман эпир. Шел, ветеран нумаях пулмасть çĕре кĕчĕ.

Пулса иртнĕ ĕç хыççăн эпĕ çакна ăнлантăм: çапла, çын йывăрлăхра тĕрĕсленет. Начар халăх çук, анчах начар çынсем кирек мĕнле халăхра та пулаççĕ. Çав шутрах коммунистсен йышĕнче те. Пирĕн Келье политрук çавăн йышшисенчен пĕри пулнă. Йывăр самантра юлташне пулăшас выранне вăл хăйĕн тирне çех хÿтĕленĕ мар-и? Аслă вăрçăра эпĕ хам та политрука çити ÿсрĕм. Анчах çав чыслă ятпа усă курса нихçан та окопри юлташсене кÿрентермен. Атакăсене чи малтан çĕкленнĕ кăна.

Кÿршĕ Галкин Костя пĕлет. (Эпĕ ирхине кÿршĕри хапха умĕнче кĕреçе пек шур сухаллă старик юр тасатнине аса илтĕм. Вăл шăпах çавă пулнă иккен). Пĕрлеччĕ эпир. Тепĕр Галкин, Николай Григорьевич кÿршĕри чаçраччĕ. (Эпĕ ăна лайăх пĕлетĕп. Хăй вăхăтĕнче Н. Г. Галкин, Хĕрлĕ Ялав орденĕпе нумай çар наградисен кавалерĕ, вырăнти колхоз председателĕнче тăрăшрĕ. Шел, халĕ унăн ялти çурчĕ пушанса юлнă, хăй Ульяновскра ачисем патĕнче пурăнать). Курма пынăччĕ вăл ман пата. Бортовой машинăпа пырса çитрĕ. Чылайччен калаçса лартăмăр.

— Георгий Константинович Жукова тĕл пулни çинчен каласа кăтартăр-ха, — астутартăм эпĕ.

— Ку вăл çапларах пулчĕ, — хаваслансах аса илчĕ Егор

Терентьевич. — Çул çинче кĕтсе тăнă чух сасартăк автомашина колоннине асăрхарăмăр. Пирĕн тĕле çитсен чарăнчĕç. Пĕр автомашина ăшĕнчен пысăк çар çыннисем тухрĕç. Çапла вара пирĕн ума Жуков комкор хăй çитрĕ-тăчĕ. Эпир ăна тӳрех палласа илтĕмĕр. куçсемпе ун çине тинкертĕмĕр.

— Кто курит? — терĕ вăл кĕсйинчен "Казбек" пачкине туртса кăларса. Салтаксем пирус курупки еннелле туртăнчĕç. Эпĕ те, пирус туртмансккер, куннехинче тӳссе тăраймарăм, пĕр пирусне илсе тивертсе ятăм. Кăмăлшăн.

— Мĕнле условисем? — татах ыйтать комкор.

— Аван! — тетпĕр ăна хирĕç.

Тата мĕн калас? Чăннипех те пире пур енĕпе те лайăх тивĕçтерсе тăратчĕç ун чух. 1938 çулхи хĕлле, тĕслĕхрен, кăçатă, икĕ мăшăр пурттинкке, ăшă кĕпе, ваткăпа сăрнă шăлавар панăччĕ пире. Гимнастерка çинчен пиншак тăхăнаттăмăр. Кĕрĕк. Халат. Ăшă çĕлĕк. Пит çинче икĕ куç валли çех шăтăк юлать. Халĕ шутлатăп та тĕлĕнетĕп: ăçтан патшалăх ăна-кăна çитернĕ? Чăннипех те çар валли нимĕн те шеллемен-çке? Ку чухне акă пĕрмай "укçа çук" теççĕ.

— Сăлтавĕ каламасăрах паллă, — тетĕп эпĕ. — Ун чухне пурлăх çăлкуçĕсем пурте патшалăх аллинче пулнă-çке. Пĕрле ĕçлесе илнĕ тупрана айккинелле салатман, ăçта кирлĕрех — çавăнта янă. Халĕ акă, хăвăрах куратăр...

— Ку тĕрĕсех ĕнтĕ, — килĕшет манпа Егор Терентьевич. — Кунашкал пăтранса пурăннă пулсан, пире Гитлер çарĕ çăмăллăнах таптаса кайнă пулĕччĕ...

КĔСКЕ СПРАВКА. Халхин-Гол, МХРпе Китай çĕрĕсем çинчи юханшыв. 1939 çулхи май — сентябрь уйăхĕсенче кунта, МХР территорийĕ çинче, хĕç-пăшаллă конфликт сиксе тухнă. Япони милитарисчĕсем МХР территорине тапăнса кĕнĕ. Июлĕн 2-мĕшĕнче вĕсен йышлă çарĕ юханшыв урлă каçса Баян-Цаган сăртне тытса илнĕ. Совет Союзĕпе МХР тунă килĕшӳ тăрăх, çапăçусене совет салтакĕсем те хутшăннă. Командование Г. К. Жуков комкора шанса парсан лару-тăру татăклăн улшăннă. Августăн 20-мĕшĕнче пĕрлешӳллĕ вăйсем контрнаступление куçнă. Августăн 23-мĕшĕ тĕлне Япони самурайĕсене ункăна çавăрса илнĕ, кун хыççăн тăшман салтакĕсен ушкăнĕсене аркатма пуçланă. Августăн 31-мĕшĕ тĕлне МХР территорине тăшмансенчен йăлтах тасатса пĕтернĕ. Татăклă тапхăрта çар операцийĕсене Г. К. Жуков комкор ертсе пынă. Çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн 17121 салтака

орденсемпе медальсем парса наградăланă, 70 çын Совет Союзĕн Геройĕ ятне тивĕçнĕ. Çав шутра Г. К. Жуков комкор та пулнă.

Хăйĕн Монголири "эпопейине" вĕçленĕ хыççăн Егор Терентьевич çӳлĕк çинчен пĕр кĕнеке шыраса тупса мана тыттарчĕ.

— Акă çак кĕнекере çырса кăтартни пурте тĕп-тĕрĕс. Унта Шубин политрук заместителĕ çинчен çырнă йĕркесем пур. Эпир унпа пĕр автомобиль батальонĕнчех пулнă, — терĕ вăл.

Эпĕ хама тăсса панă кĕнекепе паллашатăп. Д. А. Бакаев. "В огне Хасана и Халхин-Гола" ятлă вăл. Саратоври Атăл тăрăхĕнчи кĕнеке издательствинче 1984 çулта çапăнса тухнăскер. Асăннă батальонри салтаксем çинчен çырнă сыпăк "Чудо-богатыри" ятлă. Унта ентешпе пĕрле 276-мĕш уйрăм автомобиль батальонĕн 3-мĕш ротинче çар хĕсметĕнче тăнă А. Д. Шубин политрук çуммин сăнĕ те пур. Пирĕн çине "буденновка" тăхăннă кăмăллă сăн-питлĕ салтак пăхса ларать. Акă вăл аса илнĕ хăш-пĕр йĕркесем:

— Автобатри шоферсен çăмăл мар ĕçĕ çинчен калас-тăк, пĕр цифра илсе кăтартатăп — 55.000 тонна. 1939 çулхи августăн 1-20-мĕшĕсенче кăна, çак районти япони çарĕсене çавăрса илсе аркатассишĕн тĕп наступлени тĕлне хатĕрленнĕ тапхăрта, 650 километрлă хушăра çавăн чухлĕ груз турттарнă...

Çĕнтерӳшĕн хунă çак пысăк ĕçре Егор Терентьевич Воробьевăн тӳпи те пысăк пулнă. Ахальтен мар çав çапăçусене хутшăннă ытти совет салтакĕсемпе пĕрле вăл Монголи Халăх Республики икĕ медальне тивĕçнĕ. Çаплах ăна командовани сакăр хутчен тав тунă, командирсем çыхса çӳрекен чĕн пиçиххи парнеленĕ. 1939 çулхи сентябрь уйăхĕнче Воробьева комсомол ретне йышăнаççĕ.

Малалла пирĕн калаçу Финн вăрçи çине куçрĕ.

КĔСКЕ СПРАВКА. Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи 1939-1940 çулсенчи вăрçă виçĕ уйăх ытларах тăсăлнă (1939 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче пуçланса 1940 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче вĕçленнĕ). Вăл Финляндин ун чухнехи правительстви Совет Союзне хирĕç агресилле политика тытса пынине пула хускалнă. Калаçусем кашнинчех ăнăçсăр вĕçленнĕ. Чикĕри провокацилле ĕçсене пула вăрçă конфликчĕ сиксе тухнă. Çав "пĕчĕк вăрçăра" Хĕрлĕ Çар шартлама сивĕ хĕл условийĕсенче тăшманăн çирĕпленсе ларнă вăйĕсене хирĕç кĕрешес енĕпе паха çар опычĕ пухнă.

1939 çулхи декабрь уйăхĕнче автобата Ленинград çар округне куçараççĕ. Лодейное Поле станцине çитсе чарăнсан Петрозаводск енче çапăçакан 8-мĕш çар чаçĕсен склачĕсене çункăçсемпе çар хатĕрĕсем турттарма тытăннă.

— Кунта хёлё тата хаяртарах пулчё, — аса илет Егор Терентьевич.

— Çар эшелонё Ленинградăн çурçёр енне çитсе чарăнчё. Унта та автомашинăсемпе малти линие бензин турттарса тăтăмăр. Сывлăш температури 45 градус таран анса ларни те пулнă. Кабинăсене кёççе сăрса ăшăтма, шăтăк-çурăксене таччăн питёрме тиврё. Провокацисенчен асăрханса, "çула май" мирлё граждансене лартса кайма юраман. Çак йёркене пăхăнмасан çирёп явап тыттарнă.

Автомобиль водителёсем çапăçусене тӳрремёнех хутшăнман пулин те, вёсен çар çулё епле хăрушă пулни каламасăрах паллă. Ара бензин бакне тăшман пульли лексен вăл çийёнчех сывлăша сирпёнме пултарнă-çке. Кунта та хаяр та чее тăшманпа çапăçма тивнё вёсене. "Кукушка" текен финн снайперёсен тӳсёмлёхёпе ăсталăхё яппун самурайёсеннинчен пёрре те кая пулман. "Карели çёр татăкё", "Маннергейм линийё" текен çар терминёсене аса илни те çителёклё.

Çункăç турттарнă çёрте командовани заданийёсене лайăх пурнăçласа пынăшăн Воробьев хёрлё армееца пёр хутчен мар тав тунă.

1940 çулхи май уйăхёнче 276-мёш автобат МХРчи Чойбалсан хулине каялла таврăнать. Кунта Егор Терентьевич ВКП (б) членён кандидачё пулса тăнă.

1941 çулхи февраль уйăхёнче Воробьев запаса тухать. Рота лейтенанчё Сабуров унăн çарти характеристикинче çапла çырса хунă: "РККАра тăнă вăхăтра ЗИС-5 автомашинăпа ёçленё. 40 пин километр чухлё çул çӳресе ёç тунă, аварисёр ёçленё, ёçе тёплён тăват, ЗИС автомашинăна лайăх пёлет.

Лайăх ёçленёшён часть командованийё темиçе хутчен тав тунă тата грамота парса чысланă".

— Çур енне киле таврăнма тухрăмăр, — терё Егор Терентьевич, "иккёмёш" "пёчёк вăрçă" çинчен пуçланă калавне вёçлесе. — Килте мана çамрăк арăм Альта кётсе пурăннă. Хресчен ёçне тунсăхланă алсене тăван уй-хир илёртсе тăратчё. Мана, çар хёсметёнче пиçёхсе тёрекленнё вăйпитти çёр çыннине, трактор бригадине ертсе пыма шанса пачёç. Орловка, Клин поселокёсемпе Лопатино, Кёçён Нагаткин ялёсенче ака-суха турăмăр. Трактористсен хушшинче Анат Тимёрçен хёрё Наçтик пурччё. Анастасия Васильевна Охотникова. Халё те пурăнать пулас-ха вăл.

Ватă тракторист Марьин... Шут ĕçне Николай Толкунов илсе пыратчĕ. Ăна ялти яш-кĕрĕм ăста купăççă пулнипе те хисеплетчĕ. Ĕмĕтсем пысăкчĕ пирĕн. Анчах вĕсем сарăмсăр татăласса кам пĕлнĕ?

# 6. Татах вăрçă!..

Пысăк вăрçă сиксе тухас хăрушлăх никамшăн та вăрттăнлăх пулман темелле. Çапах та вăл пуриншĕн те кĕтмен çĕртен пуçланчĕ.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ... Вăл кун калама çук хитреччĕ. Сенкер тӳпе. Хĕвел хĕрелсе тухать. Район центрĕнче йăлана кĕнĕ Бега пуласси çинчен пĕлтернĕ. Мĕнпур вăйпитти халăх — яш-кĕрĕмсемпе çитĕннисем — ипподрома пухăннă. Унта юртăпа хăвăрт чупакан лашасен ăмăртăвĕ пулмалла. Айккинерех, çерем çинче — çĕнĕ хăмасенчен çапса тунă вăхăтлăх суту-илӳ палаткисем. Çуракине вĕçленĕ хресчен çынни уява тухнă, савăнать.

Вăл кун пирĕн бригадăри механизаторсем те пурте уявраччĕ. Акă чи чаплă йăрсем заезда тухма хатĕрленеççĕ. Трибуна çинче чан сасси илтĕнет... Анчах мĕн ку? Сасартăк репродуктор хыттăн калаçать. Мускавăн халăха пăшăрханса пĕлтермелли хыпарĕ пур иккен: “Итлĕр!.. Молотов калаçать!..” Акă хайхи... Вăрçă!.. Халăх пĕр хушă шăпланса тăнлать. Çынсем тĕлĕннипе ним тума аптраççĕ. Часах шăв-шав, çуйхашу... Пĕрисем — йĕреççĕ, теприсем çывăх çыннисене шыраççĕ. Пурте килĕсене таврăнма васкаççĕ. Уяв çапла инкеклĕ саланчĕ...

Эпĕ те, малтанхисемпе пĕрле, тепĕр куннех çара тухса кайрăм. Пире район центрне, Аслă Нагаткин ялне, лашасемпе леçрĕç. Каллех ăсату. Унтан облаç центрне — Куйбышев хулине каймалла.

Район центрĕнчен пире редакци çынни Михаил Иванович Нюдеев (шăпах эпĕ маларах асăннă очерк авторĕ. — А. Ю.) ăсатрĕ. Ульяновска çуранах çитрĕмĕр. Унтан анаталла Атăлпа ăсантăмăр.

Эпĕ, шофер пулнă май, автобатах çырăнтăм. Хĕрĕхмĕш арми çумĕнчи санитари роти. Санинструкторĕ хамăр ялсемех — Чугунов Терентий. Кайран вăрçăра вилчĕ вăл. Ытти ентешсенчен — Турухин Тяппан, Азанов Степан (ирçелсем), Анатри ялтан — Нефедов Степан, Чăмпаль тутарĕсем 3-4 çын — Хайруллин, Айметдинов... Мана дизокамера пачĕç. Автомашинăсемпех Гомель çывăхнех çитрĕмĕр. Пирĕн задани — малти линири салтаксене мунча кĕртесси.

Ёнтӗ фронт та инçе мар. Рота командирӗпе çула тухатпӑр. Çитес çӗре çитрӗмӗр. Пирӗн пропусксене тӗрӗслеççӗ. Анчах эпир ахалех васканӑ иккен. Тӑшман хӗссе килет. Пирӗннисем чакаççӗ. Акӑ сана "тип мунча"!

Вӑрман хӗрринчи пӗр йывӑç тӑрринче тӑшмансене асӑрхаса тӑракан генерал хӑвӑрт сиксе анчӗ те пире вырӑнсӑр чӑрмантарнӑшӑн ятлама пуçларӗ.

— Нимӗçсем кунтан 200 метртра кӑна. Хӑвӑртрах тухса кайӑр! — пулчӗ унӑн приказӗ.

Чӑнах та, часах унта та кунта снарядсем çурӑлма пуçларӗç. Тӑшман çунтарать кӑна! Эпир машинӑсене хӑвӑрт каялла çавӑртӑмӑр... Пӗр хула патне çитетпӗр, тепӗрин патне. Анчах вӗсене пурне те нимӗçсем тытса илме ӗлкӗрнӗ иккен. Полтава тӑрӑхӗ... Оржица хули... Йӗри-тавра тӑшман. Эпир — ункӑра. Уйрӑмах Оржица тӗлӗнче йывӑр килчӗ. Рота командирӗ çавӑнта аманчӗ. Унӑн икӗ ури те хуçӑлнӑччӗ. Ӑна Оржицӑри санбата вырнаçтарса хӑвартӑм. Ун чухнехи лару-тӑру паллӑ: тӳпере нимӗç çӑханӗсем хуçаланаççӗ. Çул çинче пуçа çӗклеме те çук. Çара алпа епле хирӗç тӑрӑн-ха? Ротӑра пурӗ те 18 винтовкӑран ытла марччӗ. Çул çинчи салтаксем те, беженецсем те сахал мар пӗтрӗç ун чух. Ирӗксӗрех çул айккинчи кӗлтесем ӑшне тара-тара пытанма тиветчӗ.

Тӑшман ункине татса тухма хӑтланни ӑнӑçсӑр вӗçленчӗ. Азанов, ирçелсем, çавӑн чух вилчӗ. Аманнисем йышлӑччӗ. Уйрӑмах кӗпер урлӑ каçнӑ чух пысӑк çухату тӳсрӗмӗр. Манӑн автомашинӑна та çавӑн чух хӗстерсе хучӗ.

Мӗн тумалла? Ункӑран пӗчӗк ушкӑнпа çех тухма пулать. Çӗрле çула тухса, кӑнтӑрла вӗтлӗхсенче пытанса. Çапла тума хушнӑ пире. Шанчӑка çухатнисем те пулман мар.

Шыв урлӑ ишсе каçма тиврӗ. Сула çырми. Сарлакӑшӗ çирӗм метр ытла. Çыранӑн икӗ енӗпе те шурлӑх.

Эпӗ ун чухне парти членӗн кандидачӗ пулнӑ. Чи малтанах кандидат карточкипе хӗрлӗ армеец кӗнекине тӗрӗс-тӗкел упраса хӑвармалла. Вӗсене пушмак тӗпне икӗ хут çӗлесе çыпӑçтартӑм. Винтовкӑна мӑйран çакса çири тумтирпех ишсе каçма тиврӗ. Ишессе ун чухне эпӗ лайӑх ишеттӗм-ха.

Ункӑран эпир иккӗн тухрӑмӑр. Манӑн юлташ Мелекесс чӑвашӗччӗ. Вӑл та шоферччӗ. Ятне маннӑ. Çапла майпа уйӑх çурӑ тертленсе çӳрерӗмӗр. Çак хушӑра тӑватӑ юханшыв урлӑ та ишсе каçма тиврӗ. Юлашки каçӑ Дон юханшыв пулчӗ. Ун чухне çанталӑкӗ те

самаях сивĕччĕ, юр пĕрчисем те ӳккелетчĕҫ. Коротояк хулинчен виҫĕ ҫухрăмран каҫрăмăр. Ҫавăн чух шăннисем акă паян та хăйсем ҫинчен аса илтереҫҫĕ... Юлашкинчен хамăрăннисем патне тухрăмăр-тухрăмăрах. Вĕтлĕхре икĕ ĕмĕлке курăнса кайрĕ. Кусем хамăр дозорнăйсем пулчĕҫ.

— Стой! Кто идет! — тесе кăшкăрчĕҫ.

— Свои! — тетпĕр.

Анчах епле ĕнентерĕн-ха: манăн алăра — ҫурма автоматла нимĕҫ винтовки. Вунă патрон кĕретчĕ унта. Финка та пурччĕ. Ҫул ҫинче "тупнăскерсем". Унсăрăн епле-ха? Салтак хăйне те хӳтĕлеме те пĕлмелле. Документсене кăларса кăтартма тиврĕ. Куннехинче эпĕ вĕсене гимнастеркăн кăкăр кĕсйине шыв кĕмелле мар туртса ҫыхнăччĕ...

Мĕн калăн-ха? Чăн сăмахăн суйи ҫук. Асапне сахал мар курнă вăрҫăн малтанхи кунĕсенче хура пĕлĕт пек тапăнса килекен, ҫапăҫусем тĕлне лайăх хатĕрленнĕ фашистсен эшкерне пӳлме тухнă хĕрĕх пĕрремĕш ҫулхи совет салтакĕсем. Ҫавсенчен пĕри пирĕн ентеш Егор Терентьевич Воробьев та пулнă.

Ҫулсем иртнĕ хыҫҫăн ку чухнехи тĕпчевҫĕсем ҫав вăрҫăн йывăр тапхăрне шута илмесĕр хăварнипе килĕшме пулать-и-ха? Сăмахран, эпир маларах асăннă энциклопедие ĕненес пулсан, пирĕн ентеш вăрҫă пуҫланнă хыҫҫăн икĕ ҫулталăкран тин ҫапăҫăва кĕнĕ пек пулса тухать. Чăннипе вара вăл вăрҫа ăсаннăранпа пĕр кун та унăн вучĕ ăшĕнчен тухман-ҫке-ха? Чи йывăр вăхăтра та ытти салтаксем хушшинче хăйĕн тавҫăрулăхĕпе тата хăюлăхĕпе палăрса тăнă. Сăмахран,ункăран тухса инженери батальонне лексен вăл пĕр хушă слесарьте ĕҫленĕ, унта минăсем лартакансем валли ĕҫе ҫăмăллатакан хатĕр туса ăсталанă, каярах нимĕҫсен трофей автомашинине хута ярса операцисене ăнăҫлă пурнăҫласа пыма пулăшнă.

Е. Т. Воробьевăн ҫапăҫури ҫулăм витĕр выртнă ҫул-йĕрĕсем ҫинчен 9-мĕш гварди сывлăш-ҫар десантникĕсен дивизийĕн ветеранĕ И. Чашков отставкăри полковник тĕплĕн ҫырса кăтартнă. Акă ҫав документран илнĕ йĕркесем:

"...1941 ҫулхи июнĕн 23-мĕшĕнче Е. Т. Воробьева Хĕрлĕ Ҫара илеҫҫĕ, Куйбышев хулине 58-мĕш уйрăм санитари ротине йĕркеленĕ ҫĕре яраҫҫĕ, унта ДДА спецмашина водителĕ туса хураҫҫĕ. 1941 ҫулхи август уйăхĕнче ротăна фронта яраҫҫĕ, вăл Гомельтен ҫурҫĕререх вырнаҫнă 21-мĕш ҫар составне кĕрет... Тăшманăн тан мар вăйне хирĕҫ ҫĕкленнĕ хаяр ҫапăҫусем вăхăтĕнче 21-мĕш ҫар чаҫĕсем чакса

пынӑ условисенче рота хӑйӗн задачисене пурнӑҫлама пултарайман. Ӑна ҫарӑн личнӑй составӗсемпе аманнисене турттаракан подразделени туса хума та май пулман. 21-мӗш ҫар чаҫӗсемпе пӗрле вӑл кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле чакса пынӑ, 1941 ҫулхи сентябрьте Полтава облаҫӗнчи Оржица районӗнче тӑшман ункине лекнӗ. Виҫӗ кун ҫапӑҫнӑ рота, анчах вӑйсем ытла та тан пулман. Машинӑсем пӗтсе ларнӑ хыҫҫӑн унӑн личнӑй составӗ ушкӑнпа та, пӗчченшерӗн те ункӑран тухнӑ. Е. Т. Воробьев 1941 ҫулхи ноябрьте Курск облаҫӗнчи Обоянь хули ҫывӑхӗнче ункӑран тухнӑ, ӑна кунта Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи 40-мӗш ҫарӑн 88-мӗш уйрӑм инженери батальонне янӑ, ГАЗ-АА автомобиль водительне уйӑрса лартнӑ.

Батальон хӳтӗленмелли сооруженисем, дзотсем, команда пункчӗсене хӳтӗлемелли вырӑнсем тунӑ, мина уйӗсем вырнаҫтарнӑ, йӗплӗ пралуксем карнӑ.

1942 ҫулхи май уйӑхӗнче гитлеровецсен командованийӗ Кавказпа Анат Атӑла тытса илес тӗллевпе Совет Союзӗпе Германи фрончӗн кӑнтӑр участокӗсенче анлӑ наступлени пуҫласа янӑ. 1942 ҫулхи июнь уйӑхӗн вӗҫӗнче нимӗҫ фашисчӗсен ҫарӗсем совет ҫарӗсен оборонине Воронежпа Острогожски енче татса кӗрсе тухӑҫалла ӑнтӑлнӑ.

88-мӗш уйрӑм инженери батальонӗ, Кивӗ Осколӑн хӗвеланӑҫ енче вырнаҫнӑскер, каллех ункӑ ӑшне тӑрса юлнӑ. Машинисене тӗп туса, личнӑй состав ушкӑнпа тата пӗчченшерӗн ункӑран тухнӑ. Е. Т. Воробьев, Воронеж облаҫӗнчи Коротояк хули ҫывӑхӗнче Дон урлӑ ишсе каҫса, 1942 ҫулхи июль уйӑхӗнче ункӑран тухать. Ӑна 40-мӗш ҫарӑн 14-мӗш уйрӑм батальонне яраҫҫӗ. Машинӑсем ҫуккине пула юсав мастерскойӗнче слесарь ӗҫӗсене туса пыма тивет.

Сталинградра хаяр ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра батальон оборонӑна инженери енчен аталантарнӑ, тӑшман ҫулӗ ҫине минӑсем вырнаҫтарнӑ. Хӗрӳ самантсенче ку ӗҫе юсавҫӑсене те явӑҫтарнӑ. Егор Терентьевич мина хуракан салтаксене пулӑшнӑ, мастерскойӗнче ҫак ӗҫе ҫӑмӑллатакан хайлав та туса хатӗрленӗ.

1943 ҫулхи январь уйӑхӗнче Воронеж фронтӗнчи ҫарсем наступление куҫнӑ. Виҫӗ кун хушшинче Дон урлӑ каҫмалли кӗпере хывса, батальон тапӑнакан ҫарсем хыҫҫӑн пынӑ.

Совет ҫарӗсем хӗснипе гитлеровецсем хӗҫ-пӑшалпа ҫар техникине пӑраха-пӑраха хӑварсах чакнӑ. Дон юханшывӗн хӗвеланӑҫ ҫыранӗнче Е. Т. Воробьев тӑшман пӑрахса хӑварнӑ груз турттармалли "опель-блиц" маркӑллӑ автомобиль тупать, кун хыҫҫӑн унпа ҫӳреме пуҫлать.

1943 çулхи март уйăхěнче Белгород хули çывăхěнче унăн машинине çул çинчи комендант служби тытса чарать — водителěн трофей машинине çÿреме ирěк паракан документ пулман. Кун хыççăн Е. Т. Воробьева çийěнчех хăйěн машинипе пěрле 40-мěш çарăн çул-йěре тытса тăракан 26-мěш уйрăм батальонне яраççě. Батальон тапăнса пыракан çарсем хыçěнче çул-йěр комендант службине илсе пынă. Кунта Егор Терентьевича кěçěн сержант çар званине параççě, 1944 çулхи май уйăхěнче парти членне йышăнаççě".

Калаçу ку тěле çитсен эпир иксěмěр те вăхăт кěскелсе çитнине туйса илтěмěр. Ялти шкулти учительсен коллективě Егор Терентьевича та юбилей уявне пыма йыхрав тунă. Сехет йěпписем вара пире кěтмеççě, хăвăрт малалла шăваççě. Пуçланă калаçăва тепре тěл пулсан малалла тăсма килěшсе татăлтăмăр. Халě вара...

Егор Терентьевич хăйěн ялта пурăнакан хěрěн ывăлě — 11-мěш класра вěренекен Иван ятлă мăнукě патне шăнкăравласа, ăна хăй патне килме хушрě, черетлě "задани" пачě:

— Хăвăрт Сибиркăна кÿл те пире шкула леçсе яр. Ман патра хăна пур, — терě.

Иван — Егор Терентьевичăн юратнă мăнукě. Лаша тесен каççах каять. Хăнăхнă. Çитменнине амăшě, Мария Егоровна, вырăнти колхозра "выльăх тухтăрěнче" ěçлет-çке, çавна май Иван ачаран фермăна пырса çÿренě, унта выльăх-чěрлěхě те, лашисем те...

Çамрăк "лавçă" килессе кěтсе, Егор Терентьевич тěпел кукринче апат хатěрлеме тапратрě. Апатне вăл хăех хатěрлет. Часах çатма шăрши тухрě, сысна какайě чашлатса шаритленме пуçларě.

— Иртнě пасарта чěрě пулă туяннăччě. Пěçертěм те — кушак та çимест. Пăсăлнă пулнă. Ирěксěрех кăларса пăрахма тиврě, — терě вăл, айван усламçăсене питлесе.

Ку чухне ун пеккине те хăнăхса пыратпăр ěнтě.

Сăмахланă май тата апат пиçсе çитессе кěтсе Егор Терентьевич хырăнса тирпейленме пуçларě. Хырăнасса, манашкалах, "безопаскăпа" хырăнать.

— Ăнтăрти кану çуртěнче алран туяннăччě. Аван хырать. Пěри пычě те туянма сěнет. "Йÿнě. 100 тенкěллех паратăп", — тет. Туртăнса тăмарăм. Кайран Ульяновскри универмага кěтěм те... Унашкал бритвăсене вунă тенкěллех сутаççě. Чăн хакě çапла пулнă. Мана чике тăршшех лартса хăварчěç мар-и...

Иксěмěр те кулса ятăмăр. Унашкал "супер" бритва çинчен телереклама дикторěн çăварěнчен те пěр хутчен мар илтнě-ха. "Виçě

хут якарах хырать", — тесе рекламăланине. Ку чухне акă пурте "ĕç кăлармa" тăрăшaççĕ. Ăнтăрти улшуç та: "Геройăн укçи нумай-ха", — тесе шутланă куран, хăй умĕнче Ылтăн Çăлтăрлă ветеран тăнине курсах "услам тума" именмен.

Хырăнса "çамрăкланнă" хыççăн Егор Терентьевич тумланма пикенчĕ. Шифоньертан шурă кĕпе туртса кăларчĕ. Анчах пĕр тӳми татăлнă иккен. Çавă ĕнтĕ вăл пĕччен пурнăç. Ватă салтак ирĕксĕрех нумаях пулмасть çĕре кĕнĕ мăшăрне аса илчĕ. "Альта леш тĕнчене кайма васкарĕ", — терĕ вăл çаплах ăшталанса. Юрать-ха юнашар Иван мăнукĕ пур. Вăл кукашшĕне пулăшать. Çийĕнчех йĕппе çип тупса кĕпе тӳмине çĕлерĕ. Акă уява тухса кайма та хатĕр ĕнтĕ.

Чăваш килнĕ çынна çăкăр-тăварсăр кăларса ямасть. Егор Терентьевич та мана çула тухас умĕн хистесех сĕтел хушшине лартрĕ.

— Сана асатте халалĕ çинчен каласа параймарăм-ха. Тепрехинче, — аса илчĕ вăл.

Çак хушăра пур çĕре те ĕлкĕрекен Иван кил картине тухса лаша кӳлчĕ. Апатланнă хыççăн çула пуçтарăнтăмăр. Пӳрт умĕнче пире çуна кӳлнĕ лав кĕтсе тăрать.

— Мĕн эс пире çара улăм çине лартса каясшăн-и? — терĕ пур ĕçе те тĕплĕн тума хăнăхнă кукашшĕ мăнукне, ăшшăн вĕрентсе. — Пӳртрен кавир илсе тухса сар, как-никак, эпир уява каятпăр-çке.

Часах Иван улăм сарнă çунана кавир витсе хăтларĕ.

— Но, Сибирка! — терĕ вăл, чăн-чăн ямшăк пек аллинчи тилхепине турткаласа.

Сарлака çуна хăй хыççăн çĕнĕ йĕр хăварса уçă вăркăш çиле хирĕç тикĕссĕн шурĕ.

# 7. Иккĕмĕш тĕлпулу

Анчах та иккĕмĕш хут çийĕнчех тĕл пулса калаçма тӳр килмерĕ. Пӳртре те патак çине таянса уткалакан ветеранăн урисем аптратсах çитернĕ ăна. Кун хыççăн унăн Ульяновска госпитале кайсах сипленме тивнĕ. Çитменнине ăна, вăрçăра икĕ хутчен йывăр аманнăскере тата пĕр хутчен контузи пулнăскере, вăрçă суранĕсем ватлăхра хăйсем çинчен аса илтерсех тăраççĕ ĕнтĕ.

Çапла вара эпĕ ун патне пуш уйăхĕнче шыв-шур тапрансан

тин пырса ҫитрӗм. Куннехинче тараватлă кил хуҫи мана малтанах кӗтсе тăнă: эпӗ пырса ҫитнӗ тӗле веранда алăкне те питӗрменччӗ. Мухтар та, картишӗнче пӗр-икӗ хутчен вӗрсе илсен, йăнчӗ.

Егор Терентьевич сасси, яланхи пекех, ҫирӗп, ăс-тăнӗ ҫивӗч.

— Сывлăхсем мӗнле? — тенине хирӗҫ кăмăллăн шӳтлесе хуравларӗ:

— Хама кура аптрамасть. Сиплекен врач ҫапла каларӗ: "Эпӗ сана ҫамрăклатаймастăп. Анчах ура ҫине тăрататăп, утакан-чупакан тăватăп", — терӗ. Хăвăрах куратăр: чиперех ҫӳрекен пултăм-ха.

Пăртакран малти пӳрт сӗтелӗ хушшинче пирӗн калаҫу малалла тăсăлчӗ. Эпӗ ăна чи малтан аслашшӗ ҫинчен каласа пама пулнине аса илтертӗм. Ку вăхăт тӗлне очерка ҫак тарана ҫити ҫырса та хунăччӗ ӗнтӗ, ҫав малтанхи сыпăксене сасăпах вуласа кăтартрăм. Егор Терентьевич тимлӗн итлесе ларчӗ, ҫав вăхăтрах вăл асăрханă ăнăҫсăр сăмахҫаврăнăшӗсене, ҫаплах ку е вăл ҫитменлӗхсемпе кăлтăксене юсаса пытăм. Пӗтӗмӗшле илсен, ирӗн-каҫăн ҫуралнă манăн ҫак йӗркесене очерк геройӗ кăмăлласах йышăнчӗ.

# 8. Асатте халалӗ

— 1840 ҫулта ҫуралнă асатте пурччӗ пирӗн. Осип Сергеевич. Кăкăр таран шурă сухаллăскер. Вăл эпӗ ултă-ҫичӗ ҫулта чухне ҫӗре кӗчӗ. Хăйӗн вăрăм ӗмӗрӗнче хура-шур сахал мар курнă. Удел хирӗнче эрнере икӗ кун тӳлевсӗр, чура пек, тар тăкнă. Ӗҫе кая юлса тухсан уретниксемпе ял куштанӗсем тытса хӗнени ҫинчен каласа кăтартатчӗ.

Асаннен куҫӗ витӗр марччӗ. Трахома чирне пула куҫсăрланнă вăл. Ӳт-пӳ пиҫӗлӗхӗпе вара кӳршӗ-аршăсене те тӗлӗнтернӗ. Ҫур енне кайсан юр тăрăх ҫарранах чупса каҫнă вăл вӗсем патне. "Шăнса пăсăлатăн вӗт?" — тесен: "Мӗн шăнмалли? Ăшă юр вӗт вăл", — тесе хуравланă кăна.

Эпир асаттепе асаннене питӗ юрататтăмăр. Вӗсен хăйсен "пурнăҫ кодексӗ" пурччӗ. Асатте вӗрентсе каланисене лайăх астăватăп.

— Аҫу-аннӳне вырăна хур, — тетчӗ вăл. — Усал ӗҫ ан ту, намăсран ытла — ҫылăхӗ. Кӳршӗ-аршăсемпе ан вăрҫ: ыйтнине пар, ыйтманнине ан ил. Сапăр, ырă чунлă пул. Чыса упрама пӗл. Кӗҫӗннисене ан кӳрентер, ватăсене пулăш, хисепле. Ҫынна ырă

туни çĕре ӳкмест. Çын пурлăхне ан хапсăн, çăткăн ан пул. Нумай та пĕтет, сахал та çитет — пĕрле пурăннине мĕн çитет, теççĕ чăвашсем. Йывăрлăхран ан хăра, çынсемпе килĕштерсе ĕçле вăйна кура. Ун чухне хушăнсах пырĕ тупра. Телей укçара мар, çыннинче, чун хитрелĕхĕнче.

Асаттен çак халалĕсене эпĕ нихăçан та манман, пăсман. Вĕсем мана Аслă вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче тăшман ункине лекнĕ чи йывăр самантсенче те, Белоруссипе Украина шурлăхĕсемпе юхан-шывĕсенче путса çӳренĕ чухне те, чĕрĕ те юрлă-пăрлă окопсенчен вилĕме хирĕç чи малтан çĕкленсе атакăна тухас умĕнхи яваплă самантсенче те час-часах аса килетчĕç...

Егор Терентьевичăн çак сăмахĕсем хыççăн эпĕ паттăрлăх вăрттăнлăхĕ пирки тепĕр хут шухăша кайрăм. Акă ăçта иккен вăл, çав иксĕлми хăват çăлкуçĕ! Вată чăваш çыннин “философийĕ”, вăл пурнăçран вĕренсе тухнă ăс пĕрчисем унăн мăнукне йăнăш утăм тăвасран пурнăç тăршшĕпех асăрханса утма, татăклă самантра чи тĕрĕс позици йышăнса малалла хăюллăн талпăнма хавхалантарнă, хĕрӳллĕ шанчăк çуратнă, çирĕп вăй-хал панă. Интуици, ăрупа йăх хăвачĕ, аслă туртăм, çирĕп ĕненӳ, ăнтăлу — пурте пур унта. Ку вăл ăсчах пĕлĕвĕнчен те хаклăрах-и, тен? Ахальтен мар-çке тепĕр чухне ăслă-пуçлă çынсен хушшинче те паттăрсем мар, пач урăхла, çывăх çыннисене е тăван çĕршыва сутнă йăх-яхсем те тĕл пулаççĕ мар-и-ха? Çакна эпир пирĕн пăтравлă саманара пӳрнепе тĕллесе кăтартмасăрах куратпăр. Этемĕн ăс-хакăл критерине палăртма урăх виçе кирлĕ. Ку вăл шăпах эпир çӳлерех асăннă пурнăç шкулĕ. Пĕр сăмахпа каласан, ăс-хакăл пуянлăхне укçалла туянма çук, аслă шкул пĕтерни çинчен калакан дипломпа пĕрле те илеймĕн ăна, вăл аслă ăрусен çыхăнăвĕ урлă ваттисен несĕлĕпе атте-аннерен килекен хăватлă япала, чăн-чăн кĕтрет. Çав шкула Егор Терентьевич питех те ăнăçлă пĕтерсе тухнă темелле.

# 9. Çăлтăрлă çул

— Çапла. Кĕске вăхăт хушшинчех виçĕ вăрçă çулăмĕ ăшне кĕрсе тухма тиврĕ. Кашни çулĕ чылай ĕмĕрпе танлашать тейĕн. Кашнинчех автомашина рулĕ умне ларса. Анчах та виççĕмĕшĕ уйрăмах хаярри пулчĕ. Ахальтен мар ăна Тăван çĕршывăн аслă вăрçи тенĕ. Раççее çеç

мар, пётём тёнчене кисретни. Куннехинче уйрӑмах хаяр тӑшмана хирӗҫ кӗрешме тиврӗ пире. Хаяр та чее, мӑй таран хӗҫ-пӑшаланнӑ вӑрӑ-хурах ҫарне хирӗҫ тенӗ пулӑттӑм эпӗ. Г. К. Жуков ҫар пуҫӗ калашле, ҫакна шута илменни хамӑрӑн Аслӑ Ҫӗнтерӗве пӗчӗклетсе кӑтартни пулнӑ пулӗччӗ. Тӑшман чарусӑрччӗ, вӑйлӑччӗ, шелсӗрччӗ. Ҫавӑнпа кунта малтан "пӗчӗк вӑрҫӑсенче" пухнӑ опыт ҫеҫ ҫителӗксӗр пулнӑ. Пӗлӗт пек хӑпса килекен вӑрӑ-хурах ҫарне тан мар ҫапӑҫусенче хирӗҫ чарса пынӑ хушӑрах, пире тавӑру сехечӗ самантлӑха та канӑҫ паман. Ку вӑл — курайманлӑх хусканӑвӗ. Вӑл пирӗн кӑкӑрта кунран-кун амаланса, капланса вӑй илсе пынӑ. Кун пирки эпӗ те, вӑрҫӑн ахаль салтакӗ, пӗр хутчен мар шутланӑ. Ҫапла вара вӑрҫӑн малтанхи тапхӑрӗнче автомашина рулӗ умӗнче ларса пыни ҫырлахтармастчӗ ёнтӗ. Ҫакна эпӗ чӗрепе туйса тӑраттӑм. Урӑх, "чӑн-чӑн ӗҫ" тӑвас килетчӗ. Ҫав ӗҫе тума вӑй-хал ҫитерес пирки вара пӗрре те иккӗленмен. Ҫавӑнпа кун пирки комбата рапорт парса та пӑхрӑм. Ун чухне манӑн танк ҫине ларса ҫапӑҫӑва кӗрес килетчӗ. Ку ҫар техники маншӑн ҫывӑхрах пулнӑ. Ара маншӑн чи мирлӗ професси тракторист-ҫке-ха. Ҫав икӗ машина пӗрпеклӗхӗсем куҫкӗрет. Пӗри — ҫӗре сухалать, тепри тӑшмана ирет. Уйрӑмлӑхӗ ҫакӑнта кӑна. Юлашкинчен батальон командирӗ Разовский подполковник итлерӗ, тивӗҫлӗ характеристика пачӗ...

Акӑ ҫав ҫырса панӑ характеристикӑран илнӗ йӗркесем:

"Е. Т. Воробьев юлташ 26-мӗш ОДЭБра 1943 ҫулхи март уйӑхӗнченпе тӑрать. Ҫак хушӑра дисциплинӑллӑ, хастарлӑ, тӑрӑшуллӑ салтак пулнине кӑтартса пачӗ. Воробьев — квалификациллӗ шофер, мӗнпур йышши машинӑсене лайӑх пӗлет, машинӑпа ӗҫлеме юратать. Пуҫарнӑ ӗҫе яланах вӗҫне ҫитерет. Вырӑнлӑ пуҫарулӑх кӑтартать.

Командовани заданийӗсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑшӑн ӑна сакӑр хутчен чысланӑ. Хӑйӗн ирӗкӗпе танк ҫарӗнче хӗсметре тӑрасшӑн. Воробьев кӑмӑлне тивӗҫтерме ыйтатӑп".

— Ҫавах та танкистсем патне лекесси пулмарӗ, — аса илет Егор Терентьевич. — Ҫывӑхра танк чаҫӗсене тӗл пулаймарӑм. Эпӗ пырса ҫитнӗ 40-мӗш ҫар штабӗнче мана стрелковӑй дивизие ячӗҫ.

Веренти станцийӗнче темӗнле чаҫ салтакӗсем эшелона тиенсе ӑсанма хатӗрленнине асӑрхарӑм. Чылай хушӑ пӑхса тӑтӑм вӗсем ҫине. Шавлӑн калаҫаҫҫӗ салтаксем, шӳт тӑваҫҫӗ. Хаваслӑ халӑх. Килӗштертӗм. Юлашкинчен тӳсеймерӗм, хамӑн та вӗсемпе пӗрле фронта тухса каяс килсе кайрӗ. Ыйтса пӗлтӗм. Кусем сывлӑш-ҫар

десантникĕсем иккен. Ячĕ çапла та, чăннипе стрелковăй полк тивĕçĕсене пурнăçлакансем. Хĕвеланăç Украинăна е Белоруссие кайма пуçтарăнаççĕ. Ăçта пулсан та, çул Берлин енне выртать. Çапла вара эпĕ те çав чаçа çырăнма шутларăм. Мĕн пулать те мĕн килет, терĕм. Кусем вĕсем 23-мĕш сывлăш-çар десантлă стрелковăй полк гвардеецĕсем пулнă.

Тӳрех полк штабне пытăм. Полк парторгĕ патне кĕретĕп. Паллашрăмăр. Ку вăл гварди капитанĕ Иван Федорович Аладко пулса кайрĕ. Сăмах хыççăн сăмах. Эпĕ хам çинчен кĕскен каласа кăтартрăм. Ăна Разовский подполковник çырса панă характеристикăна кăларса тыттаратăп. Вуласа тухрĕ. Ман çине кăмăллăн пăхса илчĕ.

— Мĕнех? Питĕ лайăх" — терĕ вăл, алла ăшшăн чăмăртаса. Унтан, вăраха ямасăр, хушса хучĕ: — Пире шăпах çиччĕмĕш ротăна парторг кирлĕччĕ. Атя, кайрăмăр...

Часах эпир рота командирĕ Гурин гварди аслă лейтенант патне пырса тăтăмăр. Гурин — ватă салтак. Анчах хăйне çаплах çирĕп тытать.

— Акă сирĕн пата çĕнĕ парторг илсе килтĕм. Йышăнăр! — терĕ Аладко, мана унпа паллаштарса.

Пăртакран старшина алла вĕр-çĕнĕ автомат тыттарчĕ. Çапла вара маншăн çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ, эпĕ гвардеец-десантник, рота парторгĕ пулса тăтăм.

И. Чашков подполковник çырса пынисенчен:

“Дивизие, 5-мĕш гварди çар составне кĕртсе I-мĕш Украина фронтне куçарнă. Львов облаçĕнчи Монастырски районĕ çывăхĕнче вырнаçса, вăл çĕнĕ çапăçусем тĕлне хатĕрленнĕ.

Çар хатĕрленĕвĕпе пĕрлех партилле-политикăлла ĕç илсе пымалла пулнă. Егор Терентьевич ротăри партн ушкăнне çирĕплетессине тимленĕ, коммунистсене взводсем тăрăх вырнаçтарса тухнă. Салтаксен туслă ушкăнне чăмăртанă, вĕсем хастар çапăçма пултарччăр, тесе тăрăшнă.

1944 çулхи июль уйăхĕнче I-мĕш Украина фрончĕн çарĕсем наступление куçнă. Львов-Сандомир операцийĕ пуçланнă.

Августăн 4-мĕшĕнче, вăрăм çул хыççăн, дивизи Баранец хулин кăнтăр енне çаврăнса тухса нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç Польша çĕрĕ çинче çапăçма пуçланă. Августăн 5-мĕшĕнче дивизи Вислăпа Вислоки юханшывĕсем хушшинче пĕр уйăх хаяррăн çапăçнă.

Çав çапăçусенче çиччĕмĕш рота десантникĕсем уйрăмах

паттӑрлӑх кӑтартнӑ, кунта Воробьев паттӑрлӑх кӑтартса тата коммунистӑн хӗрӳ сӑмахӗпе салтаксене тӑшман ҫине малалла хӑюллӑн тапӑнса пыма хавхалантарнӑ.

Ҫапла, хӗрӳ ҫапӑҫусем пынӑ кунсенчен пӗринче, тӑшман ҫӗрӗ ҫинче танк моторӗсен сасси кӗрлесе кайсан, Воробьев нимӗҫ чӗлхине лайӑх пӗлекен гварди аслӑ лейтенанчӗ Болдовскийпе пӗрле, ҫӗрле хӑйсем пуҫару кӑтартса, Брень юханшывӗ хыҫӗнчи тӑшман йышӑннӑ вырӑна пырса тухнӑ, унта танксем, орудисем тата пулемет йӑвисем ӑҫта вырнаҫса ларнине тӗплӗн тупса палӑртнӑ. Таврӑнсан кун ҫинчен 23-мӗш полк командирне Д. П. Исаев гварди подполковникне пӗлтернӗ, ҫакӑ полка наступление ӑнӑҫлӑ куҫма май панӑ...”

Вулакан астӑвать ӗнтӗ, очерк пуҫламӑшӗнче эпӗ вӑрҫӑ хыҫҫӑн райхаҫатра разведчиксен хӑюллӑ та чӑрсӑр ӗҫӗ ҫинчен ҫырнӑ тӗрленчӗке тӗслӗхшӗн илсе кӑтартнӑччӗ. Кунта шӑпах ҫав эпизод ҫинчен сӑмах пырать.

— Ҫапла. Ун чухне эпир Болдовский аслӑ лейтенантпа пӗрле пулнӑччӗ, — аса илет Егор Терентьевич. — Шел, ҫав Мускав каччин малалла шӑпине пӗлейместӗп. Питӗ хӑюллӑ аччӗ. Эпир унпа унашкал заданисене кайран та пӗр хутчен мар пулнӑ.

Пӑртак вӑхӑт иртсен полк парторгӗ Аладко каллех ротӑна пырса тӗрӗслет.

— Ҫӗнӗ парторг мӗнлерех? — ыйтать вӑл Гурин аслӑ лейтенантран.

— Маттур салтак! — пулнӑ унӑн хуравӗ.

Кун ҫумне мӗн хушса калӑн-ха? Ҫапӑҫури ҫарта салтаксем пӗр-пӗрне хӑвӑрт пӗлсе ҫитеҫҫӗ, вӗсем, хӑйсем калашле, “чӑн-чӑн ӗҫре” тӗрӗсленеҫҫӗ-ҫке.

Полк ҫапӑҫусемпе малаллах куҫса пырать. Ҫапах та йывӑр ҫапӑҫусен вӗҫӗ-хӗрри те курӑнмасть-ха. Ҫав ҫапӑҫусенчен пӗринче рота командирӗ Гурин аманать. Ҫакнашкал лару-тӑрура Аладко каллех ротӑна пырса ҫитет. Кама шанса памалла ӑна? Хӑй вара. салтаксен кӑмӑлне лайӑх пӗлсе тӑраканскер, кун пирки пӗртте иккӗленмен. Воробьев! Акӑ вӑл ӑна строй умне чӗнсе кӑларать.

— Воробьев! Принимай роту! — тесе приказ парать.

Ҫак сӑмахсемпе пӗрле Егор Терентьевич ҫине ҫӗнӗ яваплӑх хурӑнать. Халӗ ӗнтӗ вӑл хӑйшӗн ҫех мар, ҫапӑҫӑва кӗрекен кашни салтакшӑн хурав тытас пулать. Ку е вӑл операци ӑнӑҫлӑхӗ вӗсене ун тӗлне епле хатӗрленме пӗлнинчен килет-ҫке? Калас пулать, командир хӑюлӑхӗ, чӑрсӑрлӑхӗ, ҫапӑҫура хӑй хыҫҫӑн ыттисене

хавхалантарса ҫёклени кашнинчех вилёме ҫёнтерме пулӑшнӑ та. Унӑн ҫак пултарулӑхӗ уйрӑмах Аслӑ вӑрҫӑн юлашки татӑклӑ тапхӑрӗнче туллин палӑрнӑ.

... Тӑшмана тапӑнас умӗнхи самант. Ҫав саманта кашни салтак хӑйӗн чӗрипе туйса, хумханса кӗтсе тӑрать. Юлашкинчен акӑ вӑл... Ҫӑлтӑр саманчӗ!..

И. Чашков подполковник ҫырса пынисенчен:

“1945 ҫулхи январӗн 12-мӗшӗнче I-мӗш Украина фрончӗ наступление куҫать. Сандомир-Силези операцийӗ пуҫланать. 9-мӗш гварди сывлӑш-ҫар десанчӗн дивизийӗ тӗп направленире тӑшман оборонине татса кӗнӗ. 5-мӗш гварди ҫарӗн Стопницы тӗркеленсе ларнӑ пунктне тытса илсе юлашкинчен Бриг (Бжег) хули ҫывӑхӗнче Одер юханшывӗ хӗррине тухмалла пулнӑ.

Наступлени ӑнӑҫлӑ пуҫланнӑ. Январӗн 12-мӗшӗнче 16 сехет тӗлне дивизи чаҫӗсем иккӗмӗш позицие тытса илсе, виҫҫӗмӗшне штурмлама тытӑнаҫҫӗ. 23-мӗш гварди сывлӑш-ҫар десант полкӗн ҫулне, Стопницыран хӗвеланӑҫ енчен тапӑнса кӗнӗ чух, Овчары ялӗ патӗнче зенитлӑ пулеметсемпе автоматсенчен пени пӳлсе хунӑ...”

Малалли ӑнӑҫусене вара шӑпах ҫапӑҫусенче пирӗн ентеш тавҫӑруллӑхӗпе хӑюллӑхӗ татса панӑ та.

Акӑ 9-мӗш гварди сывлӑш-ҫар десант дивизийӗн командованийӗ пирӗн ентеше наградӑлама тӑратнӑ чух ҫырнӑ ҫырури йӗркесем:

“Рота парторгӗ тата автоматчикӗ пулнӑ май, 12.1.41. — 12.2.45 тапхӑрти ҫапӑҫусенче Егор Воробьев ҫапӑҫура хӑй хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнине, ыттисене хӗрӳллӗ большевикла сӑмахсемпе хавхалантарса пынине пула ротӑн пӗтӗм составӗ ҫирӗплӗхпе тата паттӑрлӑхпа палӑрчӗ, кӑткӑс ҫар заданийӗсене питех те лайӑх пурнӑҫласа пычӗ.

... 1945 ҫулхи январӗн 12-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Стопницы ялӗ тӗлӗнчи тӑшман оборонине татса кӗнӗ чухне, хыт-хура ӑшне пытанса ларнӑ фашистсен автоматчикӗсем рота ҫулне пӳлсе ларнӑ. Воробьев юлташ, хӑрушлӑха пӑхмасӑр, гитлеровецсен флангӗ патне шуса пынӑ та автоматран персе виҫӗ фашиста тӗп тунӑ, ыттисем хирӗҫ пеме хӑранӑ, ҫапла вара рота малалла хӑвӑрт тата ҫухатусӑр куҫса пыма пултарнӑ. Стопницы ялӗн хӗвеланӑҫ енче гитлеровецсен виҫҫӗмӗш позицине тапӑннӑ чух гитлеровецсем пирӗн ротӑпа батальона кӗтмен ҫӗртен зенитлӑ пулеметсемпе автоматсенчен пеме пуҫланӑ. Воробьев юлташ санинструктор Мустяц юлташпа лапам

тăрăх шуса пырса тăшман патне хыçалтан пырса тухнă, тăватă автоматчика вĕлернĕ, иккĕшне тыткăна илнĕ, зенитлă пулемет расчетне тытса илсе унпа фашистсене хăйсене пеме пуçланă, çапла вара батальонпа ротăна пĕчĕк çухатупах çар задачине пурнăçлама пулăшнă.

Буско-Язынская ялĕшĕн пынă çапăçура Воробьев юлташ чи малтан атакăна çĕкленнĕ, тăшман траншейине пырса кĕрсе 9 гитлеровеца вĕлернĕ, тăваттăшне тыткăна илнĕ, икĕ ручной пулемет тытса илнĕ, ун хыççăн ытти салтаксем те траншейăна вăркăнса кĕнĕ. Нида станцине тытса илессишĕн пынă çапăçура тăшман пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, йĕплĕ пралуксем хыçĕнче рота çулне пӳлсе хунă. Воробьев юлташ, хăй пуçару кăтартса, Гаврилюк пулеметчикпа пĕрле, хăрушлăха пăхмасăр, йĕплĕ пралуксене татса кĕрсе ротăна хăвăрт атакăна çĕкленĕ. Тăшмана каялла чакарнă. Воробьев юлташ траншейăна чи малтан ыткăнса кĕрсе çичĕ гитлеровеца вĕлернĕ.

27.1.45. Одер юханшывĕн хĕвеланăç çыранĕнче плацдарм сарса пынă чух тăшман хирĕç тапăнса 1-мĕш стрелковăй батальона çыр хĕррине хĕссе лартнă. Воробьев юлташ тăшмана сылтăм енчен тапăнса ротăна атакăна çĕкленĕ, çав çапăçура 13 гитлеровеца вĕлернĕ, вĕсен станковăй пулеметне тытса илнĕ, батальона плацдарма тытса тăма пулăшнă, тăшмана пысăк çухату кӳнĕ.

31.1.45. Мольвиц ялĕ çывăхĕнче тăшман 1-мĕш батальона тапăннă, Воробьев юлташ взвода ертсе пырса тăшмана хыçалтан çавăрса илнĕ, çапла вара ăна ялтан хăваласа янă. Çав çапăçура хăй вунă гитлеровеца вĕлернĕ.

4.2.45. Пирĕн танксем тапăннă хыççăн гитлеровецсем Лаугвиту ялĕ енне чакма пуçланă. Воробьев юлташ икĕ автомат тата ручной пулемет илсе ротăран 400 метр мала иртнĕ те сивĕ шыв урлă каçса тăшман чакакан çула пӳлсе лартнă, ăна 50 метр чухлĕ çывăха ярса Кваблюк рядовойпа иккĕшĕ 47 гитлеровеца персе пăрахнă, тăваттăшне тыткăна илнĕ.

10.2.45. Эренбург ялĕ çывăхĕнче, тăшман тапăннине сирсе, кĕçĕн сержант Воробьев станковăй пулеметран персе ăна тытса чарнă. Тăшман мини лекнипе аманнă, анчах та атакăна сириччен пеме чарăнман".

Çак çапăçу эпизочĕсене илсе кăтартни кăна пирĕн ентешĕмĕр чăннипех те хăюллă та паттăр салтак пулни çинчен каламасть-и-ха?

Награда илме тăратнă çак документа 23-мĕш гварди сывлăш-çар десант полкĕн командирĕ Д. П. Исаев гварди подполковник алă пуснă. Унта автоматчиксен ротин парторгĕ Егор Воробьев фронтри пĕр уйăх хушшинче кăна "... 97 гитлеровеца вĕлерни, тăшманăн 6 пулеметне тытса илни, 9 гитлеровеца тыткăна илни" çинчен алă пусса палăртнă та. Акă вăл паттăр салтакăн Çăлтăр çулĕ...

1945 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче çав паттăрлăхшăн пирĕн ентеше Егор Терентьевич Воробьева СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă та.

1945 çулхи апрель уйăхĕнче, госпитальтен сывалса тухсан, Е. Т. Воробьев 9-мĕш гварди сывлăш-çар десантникĕсен дивизине таврăнать. Ăна 5-мĕш гварди çарĕнчи политпай çумĕнчи парти шкулне вĕренме яраççĕ.

Нимĕç самолечĕсем бомбăсем пăрахнă чух ăнсăртран çăмăл аманать вăл, анчах тек госпитале каймасть. 1945 çулхи май уйăхĕнче политшкул хупăнсан каллех хăй чаçне таврăнать.

КĔСКЕ СПРАВКА. Полтавски Хĕрлĕ Ялав, Суворовпа Кутузов орденĕсемлĕ 9-мĕш гварди сывлăш-çар десант дивизийĕ 1942 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче йĕркеленнĕ. 1943 çулхи март уйăхĕнче Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче Кивĕ Русса патĕнче наступление хутшăннă. 1943 çулхи çулла тата кĕркунне Курск патĕнчи тата Днепр çинчи çапăçусенче пулнă. Çав çулхи июльте Прохоровка патĕнче кăнтăртан тапăнса килекен нимĕçсен тĕп çарĕсене хирĕç тăнă, 5-мĕш гварди танк çарĕпе пĕрле çапăçăва кĕнĕ. Малалла Белгородпа Харьков хулисенчен çурçĕр-хĕвеланăçнерех, Украинăпа Молдавие ирĕке кăларассишĕн çапăçнă. Малалли çапăçу çулĕсем Полтава, Кременчуг, Александрия, Кировоград, Ананьев, Первомайск, Григориополь хулисем витĕр тухнă.

1944 çулхи çулла дивизи Львовпа Сандомир операцийĕсене, Сандомир плацдармне тытса тăрассишĕн Вислăпа Вислави юханшывĕсем хушшинче пулса иртнĕ юнлă çапăçусене, 1945 çулхи хĕлле Сандомир-Силези операцийĕсене хутшăннă. 1945 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче 5-мĕш гварди çарĕн тĕп направленийĕнче Стопница районĕнче нимĕç çарĕсен оборонине татса кĕнĕ, Одер урлă каçса плацдарм йышăннă. Малалла Бреслау (Вроцлав) крепоçне çавăрса илессишĕн кĕрешнĕ.

1945 çулта дивизи Берлинпа Прага операцийĕсене хутшăннă. Майăн 8-мĕшĕнче Дрезден хулине илессишĕн çапăçнă. Майăн 9-мĕшĕнче Кĕнигнетайн крепоçне тытса илсе Франци генералĕсемпе офицерĕсен пысăк ушкăнне ирĕке кăларнă, Дрезден музейĕнчи пурлăха упраса хăварнă. Майăн 9-11-мĕшĕсенче дивизи Чехословаки

çĕрĕ çинче гитлерла оккупантсене хирĕç çапăçнă. Унăн çапăçусенчи çулĕ çапла вĕçленнĕ.

Çапăçусенче палăрнăшăн дивизие "Полтавская" ят панă, Хĕрлĕ Ялав, Суворов тата Кутузов орденĕсемпе наградăланă.

Юлашкинчен çакна хушса каламалла: дивизире салтаксемпе офицерсем сахалтан та 20 пин çын çапăçнă, вĕсенчен тăххăрĕшĕ Совет Союзĕн Геройĕ ята тивĕçнĕ. Çав шутра пирĕн ентеш — Вăта Тимĕрçен чăвашĕ Егор Терентьевич Воробьев.

1945 çулхи çулла Воробьев кĕçĕн сержант демобилизаци йĕркипе килне таврăнма тухать. Анчах пересыльнăй пунктра тытса тăраççĕ, 466-мĕш артиллери полкне автомеханике яраççĕ. Кунта ăна сержант званине параççĕ. 1946 çулхи март уйăхĕнче тин тăван кил енне çул выртать. Служба ĕçне лайăх пурнăçласа пынăшăн командовани куннехинче ăна велосипед тата "хромка" хут купăс парнелет.

— Кайран, тăван яла Мускавран Правительство ячĕпе ярса панă çыру пырса çитрĕ, — аса илет Егор Терентьевич. — Унта çапăçури ĕçсемшĕн вăрçă хыççăн çĕршывăн чи пысăк наградине тивĕçнĕ салтаксемпе офицерсене Кремле йыхравласа чысласси çинчен пĕлтернĕ. Çав асран кайми тĕлпулăва пурĕ 23 çын пырса çитрĕмĕр. "Ылтăн Çăлтăр" медалĕпе Ленин орденне пирĕн кăкăрсем çине ун чухне СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ пулнă Николай Михайлович Шверник çакса ячĕ. Часах юнашар алăкран пирĕн ума Сталин хăй тухса тăчĕ. Награда илнĕ ятпа саламланă хыççăн уяв курки шаккаса çĕклерĕмĕр. Çапла вара хамăн ĕмĕрте мана Çĕнтерӳ Главнокомандующийĕпе те курка шаккаса çĕклеме тиврĕ...

Çак сăмахсене каланă хыççăн Егор Терентьевич шкафран сăнӳкерчĕксен альбомне кăларса кăтартрĕ. Акă вĕсем, Çĕнтерӳçĕ-салтаксем пĕрле ӳкерттернĕ сăн ӳкерчĕк... Халь ăçта-ши вĕсем? Пурте сывă-ши? Темле çав. Унтанпа çур ĕмĕр ытла иртнĕ те...

Егор Терентьевич Воробьевăн вăрçă хыççăнхи пурнăç çулĕ — йăлтах ял-йыш куçĕ умĕнче. Çĕнĕрен çуралнă хыççăнхи пек, çĕнĕ мирлĕ пурнăç пуçланнă. Çав пурнăçра Егор Терентьевич хăйĕн телейне ютра шыраман. Унченхи пекех, сăпайлăн, чăн чăвашла, ĕлĕк-авал аслашшĕпе ашшĕ пуçарнă хресчен ĕçне малалла туса пынă — тĕш-тырă çитĕнтернĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, ача-пăча çуратса çитĕнтернĕ. Анчах çĕнĕ саманара, çĕнĕ условисенче. Колхозниксем ăна колхоз председателĕн çуммине суйлаççĕ, кун хыççăн ревизи комиссине ертсе пырать. Заготзерно йышăну пункчĕн пуçлăхĕ пулать. 1954 çултанпа 17 çул хушши çамрăк хастарлăхпа каллех автомашина

рулӗ умне ларать. Ҫав вӑхӑтрах ялта ҫурт-йӗр тӑвас ӗҫ анлӑн сарӑлса каять. Колхоз председателӗ ыйтнипе Егор Терентьевич пилӗк ҫул хушши строительство бригадине ертсе пырать. Хӑй те аллине пуртӑ тытса ҫуртсем пуралать. Сӑмах май каласан, халӗ пурӑнакан ҫуртне те вӑл, тӗпрен илсен, хӑй аллипе туса лартнӑ темелле, пура купаланӑ чухне кӑна пӗрле ӗҫлекен платниксене пулӑшма чӗнме тивнӗ. Пӗр хушӑ механизациленӗ йӗтем ҫинче механикре тӑрӑшать вӑрҫӑ ветеранӗ.

1978 ҫулта тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ хыҫҫӑн та халӑх ӗҫне активлӑ хутшӑнать. Килӗнче те ахаль лармасть: аллине кӗреҫе тытса пахчара ӗҫлет, хурт-хӑмӑр ӗрчетет. Эпӗ Егор Терентьевич килӗнче "Зингер" маркӑллӑ кивӗ ҫӗвӗ машини ларнине куртӑм. Унпа та хӑех ӗҫлет иккен. Нумай ачаллӑ кил-йышра кашни кӗпе-йӗм туянассишӗнех лавккана ҫӳреме вӑхӑчӗ те пулман пулас ӗнтӗ. Ял-йыш калашле, "Егор Терентьевичӑн алпа тытса туман ӗҫӗ ҫук".

Пӗр сӑмахпа каласан, пирӗн чаплӑ ентешӗмӗр Тӑван ҫӗршывӑн чӑн-чӑн гражданинӗ, патриочӗ, ырми-канми ӗҫченӗ, ҫемье ҫавӑрса ывӑлӗсемпе хӗрӗсене ӳстерсе ҫынна кӑларнӑ кил-йыш пуҫӗпе йышлӑ мӑнукӗсемпе вӗсен ачисен ашшӗ, аслашшӗ тата мӑн аслашшӗ. Ҫапла. Вӗсем хӑйӗн Евдокия Аркадьевна мӑшӑрӗпе ултӑ ача пӑхса ӳстернӗ: икӗ ывӑл, тӑватӑ хӗр. Икӗ хӗрӗ — Верукпа Маруҫ тӑван ялтах ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ. Нинӑпа Зина — район центрӗнче Аслӑ Нагаткин ялӗнче ҫемье ҫавӑрнӑ. Аслӑ ывӑлӗ Мускавра пурӑнать, инженер. Ҫак хушӑра ҫухату та тӳсме тивнӗ: кӗҫӗн ывӑлӗ, Геннадий, автокатастрофӑна лексе сарӑмсӑр вилсе кайнӑ. Халӗ Воробьевсен ҫемье турачӗ 13 мӑнукран тӑрать, вӗсен ачисем тата улттӑн. Канмалли кунсенче ашшӗн кермен пек ҫурчӗ каллех ҫамрӑк хунавсемпе тулса ларать — ӗлӗкхилле, ҫамрӑк чухнехилле. Вӗсем ҫине пӑхсан ватӑ салтак чунӗ ҫӗнӗ хаваслӑхпа тулать. Ӑна ҫаплах ял-йыш хушшинче те час-часах курма пулать: ыррине те, йывӑрлӑхсене те вӑл ял-йышпа, халӑхпа пӗрле тӳссе ирттерет. Ҫакӑнта мар-и-ха этем телейӗ? Паттӑр салтак ҫинчен пуҫарнӑ калаҫӑва манӑн хамӑн кивӗ сӑвӑри ҫак йӗркесемпе вӗҫлес килет:

Яш-кӗрӗм ҫитӗнет сатуррӑн,
Вӑл вӗренет аслисенчен.
Эс Ҫӗр ҫинче ыр-сывӑ пурӑн,
Эс, аннӳ евӗр, ирт ҫӗртен!

Аслӑ Нагаткин.
2000 — 2001, раштав—ака уйӑхӗсем.

ЎКЕРЧЁКСЕНЧЕ:



**Халхин-Гол таврашӗнчи ҫамрӑклӑх. 1939 ҫул.**

**1941 ҫул. Вӑрҫӑ! Кӳршӗре пурӑннӑ ят тухнӑ ентеш-салтаксем мӑшӑрӗсенчен уйрӑлас умӗн. Сулахайран сылтӑмалла – Елизавета тата Степан Турухинсем, Евдокия тата Егор Воробьевсем.**





**Совет Союзӗн Геройӗ Е. Т. Воробьев.**
***(Кил-йыш альбомӗнчен илнӗ сӑн ӳкерчӗк.)***



**Госпитальте. Сылтӑмра – Е. Т. Воробьев. 1944 ҫул.**



Мускав. Кремль. Çĕршыв паттăрсене чыслать. Асăнмалăх сăн ўкерчĕк. Малти ретре сылтăмран виççĕмĕшĕ – Е. Т. Воробьев. 1946 çул.



Яла таврӑнсаҫ. Ентешсем хушшинче. Сулахайран сылтӑмалла: Вӑта Тимӗрҫен хӑни — А. П. Смирнов, Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ В. К. Пирогов, колхозри партком секретарӗ И. И. Кондратьев, хими наукисен докторӗ, Ленин тата Патшалӑх премийӗсен лауреачӗ И. И. Корнилов профессор, Совет Союзӗн Геройӗ Е. Т. Воробьев, ялти вӑтам шкул учителӗ А. И. Ирбахтин.



**Вăта Тимĕрçенти вăтам шкултан вĕренсе тухнă тăватă ăру çыннисен тĕлпулăвĕ. 1967 çул.**



**Тимĕрçен çăлтăрĕсем. Сулахайран сылтăмалла: хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ, РСФСР Аслă Канашĕн пĕрремĕш суйлаври депутачĕ К. Г. Пракова, Совет Союзĕн Геройĕ Е. Т. Воробьев, трактор бригадин бригадирĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ В. К. Пирогов.**



КПСС Ульяновск обкомĕнчи тĕлпулу. 1983 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕ.



Мускаври патшалăх архивĕнчи тĕлпулу. Сулахайран сылтăмалла: Анат Тимĕрçен ялĕнчи халăх музейĕн директорĕ И. В. Дубов, Г. М. Ломоносов, Е. Т. Воробьев. 1988 çул.



**Тăххăрмĕш сывлăш-çар десант дивизи ветеранĕсен Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 50 çул çитнĕ ятпа иртнĕ тĕлпулăвĕ. Сылтăмран иккĕмĕшĕ – Е. Т. Воробьев. 1995 çул.**



Ӑнлă районĕнчи вăрçă ветеранĕсен тĕлпулăвĕ. Сылтăмра – Е. Т. Воробьев. 1995 çул.


**Тӑван кил ӑшши. Виççӗмӗш пинçуллӑх хапхи умӗнче.**

ПРИЛОЖЕНИЕ

В "Ульяновской-Симбирской энциклопедии", изданной в 2000 году, о нем сказано так: "Воробьев Егор Терентьевич (16.04.1918, Ср. Тимерсяны ныне Цильнинского района Ульян. обл.), Герой Советского Союза (27.06.45), гв. мл. сержант, парторг роты. Образование неполное среднее. В. Сов. Армии с авг. 1938. Участник боев на р. Халхин-Гол (1939) и сов-финл. войны 1939-1940. В боях Вел. Отеч. Войны с мая 1943. В ходе наступательных боев с 12.01.45 по 3.02.1945 уничтожил 6 пулеметных точек и несколько десятков гитлеровцев. 9 человек взял в плен. Словом и личным примером воодушевлял бойцов роты на подвиги. После войны живет в родном селе, работал в колхозе. Нагр. орд. Ленина, Отеч. войны 1-й степени, медалями".

# Один из девяти*

## (Рассказ о Герое Советского Союза Е. Т. Воробьеве)

За скупыми строками справочной литературы — большая жизнь ветерана трех войн. Сын потомственного крестьянина, он рано познал труд хлебопашца. В юные годы увлекала его и романтика дальних дорог, где на каждом участке требовались крепкие рабочие руки, ибо страна была в лесах новостроек и звала молодых на трудовые подвиги. "Повидав свет", он вернулся в отчий дом. Здесь вскоре окончил курсы трактористов. "Боевое крещение" в качестве тракториста получил в соседнем селе Верхние Тимерсяны. Через год перешел на "степной корабль". Работал в родном колхозе штурвальным на комбайне вплоть до призыва в Красную Армию.

В армии получил вторую специальность — стал водителем автомашины. Служил в Монгольской Народной Республике. Перед известными халхин-гольскими событиями советская военная автоколонна, находясь в дружественной стране, обслуживала бронетанковые войска, доставляла на передовые позиции грузы и горючее. А когда разразился военный конфликт, дороги эти стали весьма опасными. Не раз попадал и наш земляк под обстрел

* "Ульяновская правда", 2001, июнь, 26.

вражеской авиации. Из самых сложных ситуаций он умел выходить целым и невредимым. Выручали самообладание, природная смекалка и смелость.

Вот как вспоминал однополчанин А. Д. Шубин — заместитель политрука 3-й роты 276-го отдельного автомобильного батальона о тех событиях:

— Чтобы лучше представить самоотверженный, нелегкий труд шоферов автобата, приведу одну цифру — 55.000 тонн. Столько было перевезено грузов на расстояние в 650 километров лишь за период с 1 по 20 августа 1939 года, то есть за время подготовки к окружению японских войск в этом районе.

В этом труде советских "чудо-богатырей", как оценил участников тех далеких событий комкор Г. К. Жуков, есть и весомый вклад нашего земляка, рядового красноармейца Е. Т. Воробьева. За отличия при выполнении заданий командования по перевозке горючего ему было объявлено восемь благодарностей и выдан командирский ремень. Здесь он получил свою первую боевую награду — медаль правительства МНР. Рос он и морально. Окреп. Возмужал. В сентябре 1939 года Воробьева принимают в комсомол. Такая вот боевая молодость нашего земляка.

После бурных событий на Халхин-Голе батальон снова приступил к перевозкам грузов. Но недолго продолжалась эта мирная передышка. Началась советско-финская кампания. В ней Егор Терентьевич тоже принимает самое непосредственное участие. Вот как описывает участие нашего земляка во второй "горячей точке" его однополчанин, ветеран 9-й гвардейской воздушно-десантной дивизии полковник в отставке И. Чашков:

"... В декабре 1939 года 276-й автобат переброшен в Ленинградский военный округ. Выгрузившись на станции Лодейное Поле, приступил к перевозкам материальных средств со станций на склады частей 8-й армии, действовавшей на Петрозаводском направлении... Немало вреда причиняли финские снайперы-"кукушки". Воробьев с честью прошел это испытание...".

За отличие при выполнении заданий командования по перевозке горючего красноармейцу Воробьеву был объявлен ряд благодарностей.

В мае 1940 года 276-й автобат возвращается на место дислокации в город Чойбалсан МНР. Здесь в 1940 году Егора Терентьевича принимают кандидатом в члены ВКП (б).

В феврале 1941 года Воробьева увольняют в запас. Командир роты лейтенант Сабуров выдал ему такую характеристику: "За время нахождения в РККА работал на автомашине ЗИС-5, наездил 40 тыс.км, аварий не имеет, к работе относится хорошо, автомашину ЗИС-5 знает хорошо. За хорошую работу имеет ряд благодарностей, премии и грамоту от командования части".

Опыт "малых войн" впоследствии Е. Т. Воробьев вполне умело и профессионально использовал на фронтах Великой Отечественной. О ратных подвигах нашего земляка написано немало. Среди них книги И. И. Рощина и А. И. Марчука "Парторги военной поры" (М., 1979), "На боевом рубеже" (Саратов, 1982) и др. К сожалению, как утверждает очевидец и летописец героического пути 9-й гвардейской воздушно-десантной дивизии И. Чашков, "авторы допустили много ошибок и вымысла".

На наш взгляд, и короткая фраза из упомянутой экциклопедии: "В боях Вел. Отеч. войны с мая 1943", — мягко говоря, не соответствует действительности. Ибо Е. Т. Воробьев уже на второй день войны — 23 июня 1941 года — снова был призван в Красную Армию. А в августе 1941 года отправлен на фронт в качестве водителя спецмашины ДДА. В районе севернее Гомеля произошла первая встреча с неприятелем. Был участником неравных схваток с превосходящими силами противника. Вскоре рота, в которой он служил, в районе Оржицы Полтавской области попала в окружение. Затем личный состав группами и в одиночку выходил из окружения. В коротких стычках с противником были первые потери боевых друзей. Попытки прорыва наших повторялись неоднократно. Не их вина, что силы были слишком неравными. Окруженцы дрались отчаянно. Не у всех оказались даже винтовки. Но они весьма успешно пользовались трофейным оружием. Это было долгое, изнурительное испытание — испытание голодом, холодом. Четырежды вплавь пересекали водные, болотистые преграды, поздней осенью переплыли Дон. Некоторые не выдерживали этих испытаний. Но Егор Терентьевич выдержал. При этом всегда проявлял смелость и находчивость. Сберег честь и достоинство советского солдата и коммуниста. Сохранил кандидатскую карточку, военный билет и личное стрелковое оружие. А когда после чудовищных лишений вернулся к своим, снова сел за "баранку", строил оборонительные сооружения: дзоты, укрепления для командных пунктов, устанавливал минные

поля и проволочные заграждения, наконец, преследовал отступающего врага. При этом солдат Воробьев всегда отличался своей одержимостью, исключительной стойкостью. Например, в период Сталинградской битвы батальон, где он служил, совершенствовал оборону, устанавливал минные поля. В батальоне дорожно-комендантской службы, где он оказался, ему было присвоено звание "младший сержант", в мае 1944 года его приняли в партию. Вскоре он добровольно просится на передовую.

Из характеристики, данной командиром батальона подполковником Разовским: "Тов. Воробьев Е. Т. в 26-м ОДЭБ с марта 1943 года. За это время показал себя дисциплинированным, энергичным, настойчивым. Тов. Воробьев — квалифицированный шофер, хорошо знает все типы машин, машины любит. Начатое дело доводит до конца. Проявляет разумную инициативу.

За отличное выполнение заданий командования имеет восемь поощрений. Добровольно изъявил желание служить в танковых войсках. Ходатайствую об удовлетворении желания Воробьева".

Однако танковых частей поблизости не было. По дороге на передовую неожиданно состоялась встреча с парторгом 23-го гвардейского воздушно-десантного стрелкового полка гвардии капитаном И. П. Аладко. Эта встреча и определила дальнейшую судьбу солдата Егора Воробьева. Он был направлен в 7-ю стрелковую роту. Стал гвардейцем-десантником и парторгом роты, после выхода из строя командира роты гвардии старшего лейтенанта Гурина возглавил ее. В дальнейшем, в условиях ожесточенных боевых действий, в полной мере оправдал это назначение.

Из записок ветерана 9-й гвардейской воздушно-десантной дивизии полковника в отставке И. Чашкова: "12 января 1945 года 1-й Украинский фронт перешел в наступление. Началась Сандомирско-Силезская операция. 9-я гвардейская воздушно-десантная дивизия прорвала оборону противника на главном направлении 5-й гвардейской армии.

Наступление развивалось успешно. К 16 часам 12 января части дивизии овладели второй позицией и начали штурм третьей. 23-й гвардейский воздушно-десантный полк, наступая западнее Стопницы, был остановлен у населенного пункта Ончары огнем из зенитного пулемета и автоматов.

Воробьев и санинструктор роты гвардии рядовой Мустяца

по собственной инициативе стали пробираться по лощине в тыл врага. В траншее, замаскированной бурьяном, увидели несколько автоматчиков, которые своим огнем мешали продвижению роты, подползли к гитлеровцам с фланга и расстреляли их. Продвигаясь дальше, вышли в тыл к гитлеровцам-пулеметчикам и открыли огонь. Уничтожив четверых и захватив в плен двух гитлеровцев вместе с пулеметом помогли продвижению полка.

В бою за село Буско-Язынская Е. Т. Воробьев первым поднялся в атаку и, увлекая за собой бойцов, ворвался в траншею противника. В этом бою Егор Терентьевич лично уничтожил 9 гитлеровцев, четверых взял в плен и захватил два ручных пулемета.

В бою у реки Нида противник, прикрывшись проволочными заграждениями, преградил роте путь сильным пулеметным огнем. Воробьев вместе с пулеметчиком Гаврилюком проделали проход в проволочном заграждении, первыми ворвались в траншею врага и обеспечили продвижение роты вперед. В этом бою Егор Терентьевич лично уничтожил семь гитлеровцев.

23 января 1945 года части дивизии успешно форсировали реку Одер и захватили плацдарм в районе деревни Эйхенрид. Начались ожесточенные бои за расширение плацдарма.

27 января противник контратаковал и потеснил к берегу 1-й стрелковый батальон. Создалась угроза батальону быть сброшенным в реку. Учитывая создавшееся положение, Е. Т. Воробьев поднимает роту в атаку, наносит удар по флангам противника, помогает батальону устоять. В этом бою Егор Терентьевич уничтожил 13 гитлеровцев и захватил станковый пулемет.

30 января дивизия перебрасывается на плацдарм в 25 км юго-восточнее Бреслау (Вроцлав) и ведет ожесточенные бои по расширению плацдарма и окружению крепости Бреслау. Дивизия прошла с боями более 500 км. Солдаты были утомлены. Парторг Воробьев использует любую передышку в бою, чтобы напомнить коммунистам об их личном примере в бою, довести до каждого бойца сводки Совинформбюро и благодарственные приказы Верховного Главнокомандования, проверить, как обеспечены бойцы боеприпасами и питанием.

31 января, во время отражения контратаки противника из населенного пункта Мольвиц, Е. Т. Воробьев возглавил взвод, обошел противника и с тыла ворвался в село, чем способствовал

отражению контратаки и захвату села. В этом бою Егор Терентьевич уничтожил 10 фашистов.

4 февраля гитлеровцы, атакованные нашими танками, стали отходить от населенного пункта Лаугвиту. Воробьев вместе с гвардии рядовым Кваблюком, взяв ручной пулемет и автоматы, выдвинулись на 400 м вперед и устроили засаду на пути отступления немцев. Подпустив врага на 50 м, они почти в упор расстреляли 47 гилеровцев и четверех взяли в плен.

10 февраля у населенного пункта Эрлебург немцы перешли в контратаку. Е. Т. Воробьев лег за станковый пулемет и огнем остановил противника. Гитлеровцы открыли по Воробьеву минометный огонь. Егор Теретьевич был тяжело ранен, но продолжал вести огонь, пока контратака врага не была отбита.

За месяц боев парторг роты гвардии младший сержант Е. Т. Воробьев лично уничтожил 97 гитлеровцев и 9 взял в плен, захватил шесть пулеметов врага.

За отличия в боях с немецко-фашистскими захватчиками и проявленные при этом героизм и мужество гвардии младшему сержанту Воробьеву Егору Терентьевичу Указом Президиума Верховного Совета от 27 июня 1945 года было присвоено звание Героя Советского Союза с вручением ордена Ленина и медали "Золотая звезда" (№8916)".

В энциклопедии "Великая Отечественная война 1941-1945" 9-я гвардейская воздушно-десантная дивизия включена в список соединений и частей, особо отличившихся в боевых действиях. В ее послужном списке насчитывается девять Героев Советского Союза. Один из них наш земляк, гвардии младший сержант, политрук, а затем командир роты Егор Терентьевич Воробьев. Он никогда не искал легких путей, а потому успешно выдержал и испытание славой. Завершив свой долгий ратный путь, участник трех войн в годы мирного труда оставался верным родному краю, отдавая все свои силы и энергию на развитие колхозного производства, был передовым тружеником, строил, водил автомашины в мирные рейсы и по-прежнему живет в доме, построенный своими руками. Достойный гражданин Отчизны, патриот — это не дежурные газетные эпитеты, которые применимы к нему. Егор Терентьевич всегда находится в гуще сельской жизни. Со своей женой, Евдокией Аркадьевной, они вырастили двоих сыновей и четыре дочери. С годами подросли многочисленные

внуки и правнуки. К сожалению, несколько лет назад Егор Терентьевич овдовел. Редки встречи однополчан-ветеранов. Но они живы в памяти. Дарственные надписи на фотокарточках... Их много. Вот одна из знаковых: “Дорогому однополчанину Воробьеву Егору Терентьевичу. Не я тебя сделал героем, ты сам этого заслужил перед Родиной и та тебя высоко оценила. Но я рад, что тебя представил к этой высокой награде.

Будь здоров все сто лет, отведенные человеку, — ты этого заслужил.

Обнимаю, твой полковник И. Аладко. Москва, 19.12.1977 г.”.

Между прочим, в свое время мать героя — Татьяна Захаровна — перешагнула заветный столетний рубеж. Егор Терентьевич тоже стал одним из старожилов села — в этом году ему исполнилось 83 года (В апреле 2002 года − 84 года − **А. Ю.**). Говорят, старость не радость. Несмотря на преклонный возраст, Егор Терентьевич ведет активный образ жизни, часто встречается с молодежью.

В Цильнинском районе стало доброй традицией — учащиеся спортивной школы, юные борцы вольного стиля ежегодно проводят свои состязания на приз имени Героя Советского Союза Егора Терентьевича Воробьева. Не был исключением и этот год. На соревнованиях присутствовал сам Егор Терентьевич, что придавало встрече особую окраску.

56-я годовщина Великой Победы совпала с днем рождения ветерана трех войн. В дни всенародного торжества он получил многочисленные поздравления от своих земляков и однополчан, от районных и областных руководителей. Особенно волнующим событием была для него встреча с Главой администрации области. Глубоко символичен и закономерен тот факт, что Герой России Владимир Анатольевич Шаманов вручил Герою Советского Союза Егору Терентьевичу ключи от автомашины. Пожелаем же ему и мы бодрости духа на долгие лета!

## ТУПМАЛЛИ


1. Ӗмӗр ҫынни ........................................................ 3
2. Паянхи Вӑта Тимӗрҫенте ........................................ 7
3. Атте-анне ............................................................ 12
4. Ҫамрӑклӑх .......................................................... 14
5. Аслӑ вӑрҫӑ прологе ............................................. 16
6. Татах вӑрҫӑ! ........................................................ 23
7. Иккӗмӗш тӗлпулу ................................................ 28
8. Асатте халалӗ ...................................................... 29
9. Ҫӑлтӑрлӑ ҫул ....................................................... 30
*Ӳкерчӗксенче* ........................................................ 39
*Приложение.* Один из девяти (Рассказ о Герое Советского Союза Е. Т. Воробьеве) ........................................................ 49



**Анатолий Федорович ЕРМИЛОВ (ЮМАН)**

**ПАТТӐРЛӐХ ВӐРТТӐНЛӐХӖ**

**Секреты воинского подвига**

На чувашском и русском языках

Редактор *А. Ф. Ермилов*
Технический редактор *В. Ф. Ромашкин*
Ответственный за выпуск *Н. И. Давыдова*
Компьютерный набор и верстка *В. А. Ефимова, А. А. Романов*
Корректор *В. Ф. Ромашкин*
Фото *В. В. Дедушкин, Н. А. Казаков, Н. К. Семенов*
Рисунки *Еграшкина Н. Н., Шишкина И. С.*

Лицензия ЛР № 040806 от 24.03.1997 г.

Сдано в набор 16.10.01. Подписано в печать 16.05.02. Формат 60x84 1/16.
Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,5.
Уч. изд. л. 3,25. Тираж 500. Заказ 3525. Цена договорная.

Отпечатано с готовых диапозитивов.

ГУП "Облтипография "Печатный двор".
432049, г. Ульяновск, ул. Пушкарева, 27.

10z